24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ИЮНЬ 13 ЭРНЕКУН 137 (5852) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Çĕнçĕре куçарас ĕçе большевикла организацилер

Революцичченхи Российăра ял хресченшĕн чăнчăн амаçури пулнă. Уйрăм хуçалăхпа пурăнса, кулаксемпе куштансемшĕн ĕçлесе, чухăн хресчен хăйĕн çемьине тăрантарса пурăнмаллăх та тырпул туса илеймен. Ниçта кайрăх çукки кура, вăл çĕнçĕрте «телей» тупма шутланă. Пур пек çуртйĕрне сутса, ани-çаранне пăрахса, пурнăçне ылханса, тăван ялĕнчен тухса кайнă. Анчах ĕмĕтленнĕ телей çĕнçĕрте те тупăнман. Мĕншĕн тесен ун чухне сахăни çавнашкал пулнă. Помещиксемпе капиталистсен власçĕ, патша правительстви халăхшăн тăрăшман. Çĕнĕре, Урала çĕнçĕре куçса кайнă чухăн хресченсем хăйсен хуçалăхне ура çине тăратма вăй çитереймен. Вара вĕсем пинĕ-пинĕпе кĕлмĕçе тухса пынă, пĕчĕк ачисене, ватă стариксене çавăтса ыйткаласа çӳренĕ. Нимсĕр тăрса юлнă «телей шыракансен» ирĕксĕрех кулак танатине пырса çакланма тивнĕ.

Çапла пулнă ĕлĕк. Ахальтен мар ĕнтĕ чăвашсем ĕлĕкхи çĕнçĕр пурнăçĕ çинчен чăна-чĕрене кайса тивекен хурлăхлă юрăсем хывнă. Çĕнçĕр тени ĕлĕкхи саманра хресчен нимсĕр-мĕнсĕр тăрса юлнине пĕлтернĕ.

Иртсе кайрĕç инкеклĕ вăхăтсем. Совет власçĕ, коммунистсен партийĕ хресченсене ĕмĕрлĕхех чухăнлăхран хăтарса, пуян та культурăллă пурăнма пур условисене те туса пачĕç. Колхозсене кĕрсе пĕрлешнĕ хресченсем ялта çĕнĕ пурнăç тăваççĕ. Ялхуçалăхĕнчи хăватлă машинăсем вĕсен ĕçне çăмăллатаççĕ. Çук текех пирĕн çĕрсĕр асапланса пурăнакан чухăн хресченсем, — государство ĕмĕрлĕхех усă курма колхозсене çĕр çирĕплетсе панă. Колхозра тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлекен колхозниксем артеллĕ обществăллă хуçалăхран пысăк тупăш илеççĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене механизацилени колхозниксен ĕçне çăмăллатать çеç мар, тата колхозсенчи ĕç вăйне те чылай пушатать. Çав пушаннă ĕç вăйĕпе промышленноçра е нумай çĕрлĕ колхозсенче туллин усă курма пулать. Совет Союзĕн хĕвелтухăçĕнчи районсенче—Çĕнĕрте, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче, Карело-Финн СС Республикинче ĕç вăйĕ çителĕксĕр.

Совет правительствипе партин Центральный Комитечĕ 1939 çулти майăн 27-мĕшĕнче «Колхозсен обществăллă çĕрĕсене салатса пĕтересрен сыхламалли мерăсем çинчен» йышăннă постановленире сахал çĕрлĕ колхозсенчи колхозниксене нумай çĕрлĕ районсене—Атăл тăрăхне, Омск облаçне, Челябинск облаçне, Алтай крайне, Казахстана, Инçет-Хĕвелтухăçне тата ытти вырăнсене куçарма кирлине палăртрĕç. Çак мероприяти пĕтĕм совет государствипе питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Сахал çĕрлĕ районсенчи колхозниксене нумай çĕрлĕ вырăнсене çĕнçĕре куçарни пирĕн тăван çĕршывăн пуянлăхĕсемпе туллинрех усă курма май парать, çĕршывăн хуçалăхпа оборона хăватне тата ытларах тĕреклетме пулăшать, совет халăхĕн пурнăç условине лайăхлатать. Çакна ăнланса, пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕççынниссем пекех, пирĕн Чăваш республикинчи колхозниксем те СССР Совнаркомĕпе партин Центральный Комитечĕ йышăннă постановленине тулли кăмăлпа хавасланса кĕтсе илчĕç. Юлашки икĕвиç çул хушшинче республикăри колхозниксене çĕнçĕре куçарас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттернĕ. Çĕршер, пиншер хуçалăхсем Союзăн нумай çĕрлĕ районĕсене пурăнма куçса, çĕнĕ вырăнта организацилене колхозсенче тăрăшса ĕçлеççĕ.

Союзăн хĕвелтухăç районĕсенче çĕр мĕн чухлĕ нумайлине çак цифрăсенчен те курма пулать: Красноярск крайĕнче колхозри кашни хуçалăх пуçне 59 гектар, Новосибирск облаçĕнче — 49 гектар, Омск облаçĕнче — 49 гектар, Алтай крайĕнче — 47 гектар, Челябинск облаçĕнче — 40 гектар çĕр тивет. Пирĕн Чăваш республикинче вара пĕр хуçалăха пĕтĕмпе те 6,08 гектар çеç тивет, акма юрăхлă çĕр татах та сахал — 4,9 гектар çеç. Ку вăл — вăтамран илсен. Республикăра пĕр хуçалăх пуçне акма юрăхлă çĕр 0,34 гектар çеç тивекен колхозсем те пур (çăмахран, Октябрьски районри «Безбожник» колхоз). Каламасăрах паллă, çавăн пек сахал çĕрлĕ колхозсенчен колхозниксен пĕр пайне çĕнçĕре куçармасан, ертель хуçалăхĕ малалла сарăлса пыма пултараймасть. Акă мĕншĕн ĕнтĕ çĕнçĕре куçарасси государствăллă пысăк ĕç пулса тăрать.

1941 çулти план тăрăх, пирĕн республикăри колхозниксемпе единоличниксене çĕнçĕре иртнĕ çулсенче пулнинчен чылай ытларах куçарса ямалла. Чăваш республикинчен кăçал Алтай крайне, Омск облаçне, Карело-Финн СС Республикине çĕнçĕре куçармалла. Çак пысăк ĕç вăл хăй тĕллĕнех пуласса шанмалла мар. Çĕнçĕре куçарас ĕçе большевикла организацилес пулать. Партипе советăн районсенчи организацийĕсен çĕнçĕре куçарас ĕçе хăйсен аллине илмелле. Чи малтанах колхозниксене çĕнçĕр пурнăçĕ çинчен тĕплĕн каласа памалла.

Илер Çĕпĕрех. Ĕлĕкхи вăхăтра Çĕпĕр ссылкăна тата каторгăна ямалли вырăн пулнă пулсан, совет власăн çулĕсенче, партипе правительство тата совет хлăхĕ тăрăшнипе, вăл чечекленекен çĕршыв пулса тăчĕ. Çĕпĕрте çутçанталăк пуянлăхĕсем ĕмăхри пек нумай. Кунта промышленноçа аталантарма та, ялхуçалăхне вăйлатма та мĕн кирли йăлтах пур. Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче Çĕпĕрти тата Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи çĕнçĕр колхозĕсен çитĕнĕвĕсене анлăн кăтартса панă. Кунта тулă хăмăш пек сĕвĕнсе çитĕнет. Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетме ырă условисем пур. Украинăран, Чăваш республикинчен, Воронеж т. ыт. облаçсенчен куçса пынă колхозниксем пуян та культурăллă пурнăçпа пурăнаççĕ. Выставкăра пулнă сынсен çаксем çинчен колхозниксене йăлтах каласа парас пулать. Çĕнçĕре кайма хатĕрленекен çын унти пурнăç çинчен лайăх пĕлсе тăтăр.

Государство çĕнçĕре куçакансене калама çук пысăк пулăшу парать. Районсенчи парторганизацисем çĕнçĕре кайаканскем мĕнле льготăсемпе усă курни çинчен колхозниксене ăнлантарса памалла. Паян эпир «Чăваш Коммуни» хаçатра Карело-Финн республикине çĕнçĕре куçса кайнă колхозниксен сыпăвĕсене пичетлесе кăларатпăр. Вĕсем хăйсен телейлĕ те пуян пурнăçĕ çинчен хĕпĕртесе пĕлтереççĕ, Чăваш республикинчи колхозниксене хăйсем патне куçса пыма чĕнеççĕ. Ялсенчи агитаторсен çав сырусемпе тата хăйсен тăван ялĕнчи колхозсемпе тăванĕсем патне янă сырусемпе усă курмалла, колхозниксене çĕнçĕр пурнăçĕпе паллаштармалла. Массăллă-ăнлантарулла ĕçре çĕнçĕре куçмалли вырăна кайса пăхса килнĕ колхозниксем те пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем хăйсем курнă-илтнине фактисемпе каласа парса, çĕнçĕре куçассишĕн витĕмлĕн агитацилеме пултараççĕ.

Çĕнçĕре куçарас плана партипе правительство кăтартнă срокра тата организованно тултарма пирĕн республикăра пур условисем те çителĕклĕ. Пĕтĕм ĕç районсенчи организацисем тăрăшнинчен килет. Анчах республикăра колхозниксене çĕнçĕре куçарасси çителĕклĕ пыратъ теме пултараймастпăрха. Уйрăмах Октябрьски районра çак ĕçе питех те япăх организацилеменĕ. Райсовет исполкомĕ çĕнçĕре куçармалли плана колхозсем тăрăх валеçсе панă чух кашни колхозăн çĕрĕ мĕн чухлĕ пуррине шута илмен, 27 колхоза 1—5 хуçалăх куçарма, 3 колхоза — 10-шар хуçалăх куçарма «план» панă. Кашни колхозран пĕрер-икшер хуçалăха çĕнçĕре куçарнин усси сахаллине район руководителĕсем ăнланманни тĕлĕнтерет. Çĕнçĕре куçарас плана ăнăçлăн пурнăçа кĕртес пулсан районсенчи партипе совет тата çĕрĕç оргăнĕсен колхозсенчи ĕç вăйĕн балансне тĕпчесе вĕренни кирлĕ.

Çĕнçĕрте янтă япала çук. Тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлемесен ниçта та лайăх пурнăç тăваймăн. Çавăнпа çĕнçĕре ĕçлеме юратакан, ĕывăрлăхсенчен хăраман, ӳркенмен колхозниксем каяççĕ. Урăх вырăна яланлăх куçакан колхозниксене суйласа илсе, колхоз пухăвĕнче çирĕплетмелле. Вĕсене вăрăм çула тухса кайнă чухне ăшă кăмăлпа ăсатса ямалла, мĕн кирлине туса памалла.

Çĕнçĕре куçарасси — политикăллă пысăк ĕç. Çак пысăк ĕçе парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем тӳрех хутшăнса ертсе пымасăр ăнăçлăн татса пама çук. Çакна яланах асра тытас пулать.

Çĕнĕ заема çырăннă сумма кунсерен ӳссе пырать

Çитĕнӳсене çирĕплетсе, пысăкрах ӳсĕмсем тăвассишĕн кĕрешмелле

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне сарас тата подписка уçсине пухас ĕç кашни кунах вăйланса пырать. Вунă кун хушшинче республикăри ĕççыннисем çĕнĕ заема пĕтĕмпе 24.565.000 тенкĕлĕх, иртнĕ султи нчен 3.549.000 тенкĕ ытларах çырăнса илчĕç.

Заем сарас ĕç колхозлă ялта нихăш çулхинчен те ăнăçлăрах пулса пырать. Çĕнĕ заема колхозниксем тата единоличник-хресченсем июнĕн 11-мĕш тĕлне 166.652 çын çырăннă. Енерхи кун тĕлне ялти ĕççыннисем хушшине заема 6.478.000 тенкĕлĕх сарнă, вăл шутран подписка уçсине 1.383.000 тенкĕ, е 21,3 процент пухнă.

Чăваш АССР ĕççыннисем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, хăйсен политикăллă-моралльĕ пĕрлĕхне, патриотизмне, тăван çĕршыва, Ленин—Сталин партине, совет правительствине, халăхсен аслă çулпуçне Сталин юлташа пĕтĕм чĕререн хĕрӳллĕн юратнине демонстрацилесе параççĕ. Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисемпе хĕçпăшалланнă ĕççыннисен политикăллă активлăхĕ ниçаçанхинчен те вăйлăн çĕкленсе пырать.

Çак çĕкленĕве, заем сарас ĕçре тунă чаплă çитĕнӳсене çирĕплетсе татах та пысăкрах çĕнтерӳсем тăвассишĕн пĕтĕм хастарлăхпа кĕрешсе пулать. Кашни ĕççыннине заема çырăнса илес ĕçе явăçтарасси — агитаторсен, заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсен, финанс активĕн, парти, профсоюз, комсомол организацисен, совет оргăнĕсен хисеплĕрен те хисеплĕ задачи пулса тăрать.

Малта пыракан районсенче заем сарас ĕçе вĕçлерĕç. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи рабочисемпе служащисем бюджетпа пăхнă суммăран иртнĕ çулхи 131 процент, ялти ĕççыннисем — 4,5 процент, пĕтĕм районĕпе — 17,9 процент иртнĕрсе çырăннă. Районĕпе илсен, колхозниксемпе единоличник-хресченсем июнĕн 12-мĕш тĕлне подписка уçсине 142.000 тенкĕ, е 51,3 процент тӳлесе татнă. Вăрмар районĕнчи колхозниксем тата единоличник-хресченсем подписка уçсине 129 пин тенкĕ (54,9 процент), Чкаловски районра — 103 пин тенкĕ (55,7 процент) парса татнă. Подписка уçсине пухас ĕç Шăмăршă, Çĕрпӳ, Елчĕк районĕсенче ăнăçлăн пулса пырать. Кунта политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилеменĕ.

Массăллă-ăнлантарулла ĕçе начар туса пыракан районсенче, финанс активĕпе ĕçлемен çĕрте пачах урăхла. Çĕмĕрле тата Улатăр хула совечĕсен исполкомĕсем заем сарас ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса кĕтсе ларчĕç. Çавăнпа та вĕсем халĕ те кая юлса пыраççĕ. Куславккапа Кувакино районĕсенче виттăватă кун хушши ĕнтĕ паллă улшăнусем пулни курăнмасть, вĕсем çавăсавах пĕр вырăнта тăраççĕ.

Заем сарас ĕçре тунă çитĕнӳсемпе нимĕн чухлĕ те лăпланса лармалла мар. Пачах урăхла, партиллĕ-массăллă ĕçе татах та анлăрах туса пымалла. Ялти тата хулари финанс активĕн ĕçне ертсе, организацилесе пыни кирлĕ. Финанс работникĕсем, ялсовет исполкомĕсем хăйсен ĕçне оперативлăрах туса пыма, кашни ĕççыннине çирĕп сыхăнса ĕçлеме тивĕç. Парти организацисен ĕççыннисен политикăллă активлăхне пуçарса пырса, Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне ăнăçлăн сарассишĕн, кашни ĕççыннинех заем сырăнас ĕçе явăçтарасишĕн пĕтĕм хастарлăхпа кĕрешмелле.

Республика 21 çул тултарнă тĕле заем уçсине пуçса çитеретпĕр

ЕЛЧĔК. Тăрмăш ялсоветĕнче виçĕ колхоз. Кунти колхозсенче уçса-тенкĕ пухас тĕлĕшпе финагент А. Смирнов юлташ ĕçлет. Çак кунсенче вăл халичен пулса иртнĕ тиражсем тăрăх облигацисене тĕрĕслесе тухрĕ.

П. Кучаков юлташа 20 тенкĕ тăракан облигаци тăрăх 50 тенкĕ выляса илинине туса парсан, пур колхозниксем те питĕ интересленчĕç, пурте хăйсен облигацийĕсене тĕрĕслесе тухма тытăнчĕç.

«Знамя» колхозра Михаил Смирнов юлташ 50 тенкĕлĕх облигацине 200 тенкĕ ытла, «Новый путь» колхоз членĕ В. Дудкин юлташ 10 тенкĕлĕх облигацине 30 тенкĕ выляса илнĕ. Ялсоветри колхозниксемпе единоличниксем пĕтĕмпе 1340 тенкĕлĕх выляса илчĕç.

Кăçалхи çĕнĕ заема колхозниксем питĕ пысăк хаваслăхпа çырăнса илеççĕ. П. Кучаков, В. Зайцев т. ыт. юлташсем 100-шер тенкĕлĕх çырăнса илсе, уçсине çийĕнчех тӳлесе татрĕç. Çĕнĕ заема «Новый путь» колхоз членĕсем 3225 тенкĕлĕх. çырăнса илчĕç. Заем сарас ĕç ялсоветри ытти колхозсенче те ăнăçлăн пулса иртрĕ.

Хальхи вăхăтра финанс активĕ, заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсем подписка уçсине пухаççĕ. Вĕсем Чăваш АССР 21 çул тултарнă тĕле заем уçсине пухса çитерессишĕн кĕрешеççĕ.

П. ЩЕРБАКОВ.

Заем уçсине тӳлесе татнă

Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем (Шăхасан р.) çĕнĕ заема 10.135 тенкĕлĕх çырăнса илсе, уçсине те çийĕнчех тӳлерĕç.

Заем сарас тĕлĕшпе Е. Степанов юлташ лайăх ĕçлерĕ. Вăл хăй пĕччен 1635 тенкĕлĕх сарса, пĕтĕм уçсине пухса пачĕ.

А. ЧЕРНОВ.

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Кипеçри «Трактор» колхоз членĕсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне 4410 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç. Заема аллă тенкĕрен кая çырăнса илнĕ пĕр колхозник та çук. Портнов юлташ 300 тенкĕлĕх, Твороговпа Андреев юлташсем 200-шер тенкĕлĕх, Егоров тата ытти юлташсем 150-шар тенкĕлĕх çырăнса илчĕç.

Паянхи куна пур колхозниксем те заем уçсине тӳлесе татрĕç.

Н. ПОПОВ.

23 пин тенкĕлĕх

СĔНТЕР. Ярославка ялсоветĕнчи ĕççыннисем иртнĕ çулти заема 10.785 тенкĕлĕх çырăнса илнĕччĕ. Çак заем уçсине пĕлтĕрех, Октябрьти Социализмла революцин 23 çул тултарнă тĕле, тӳлесе татнă.

Кăçалхи çĕнĕ заема та ялсоветри колхозниксемпе единоличник-хресченсем пĕр çын пек пулса çырăнса илчĕç. Ялсовет тăрăх пĕтĕмпе 12.250 тенкĕлĕх сарăлчĕ. Çапла вара ялсоветри ĕççыннисем икĕ çул хушшинче государствăна 23.035 тенкĕ кивçен пачĕç.

Çак уçса пирĕн социализмлă тăван çĕршывăн, унăн Хĕрлĕ Сарăпе Тинĕс-Çар Флочĕн хăватне çирĕплетнĕ çĕре кайнине колхозниксем аван пĕлсе тăраççĕ. Хальхи вăхăтра подписка уçсине пухас ĕç ăнăçлăн сарăлса пырать.

И. АРГАНДЕЕВ.

Актив пулăшнипе

ШАХАСАН. Шуркасси ялсоветĕнчи ĕççыннисем пирĕн правительство Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема кăларасси çинчен йышăннă постановленине пĕтĕм чĕререн ырларĕç, çĕнĕ заема ăнăçлăн вырнаçтарма тытăнчĕç.

Постановлени тухнă хыççăн тепĕр кунне çĕнĕ заем 13.500 тенкĕлĕх сарăлчĕ, подписка уçси 2000 тенкĕ пухăнчĕ. Халĕ ялсоветри финанс активĕ, заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсем подписка уçсине пухаççĕ. Самахран, С. Кириллов юлташ хăйĕн участокĕнче 500 тенкĕлĕх пухрĕ. Ку ĕç ытти участоксенче те ăнăçлăн пулса пырать.

В. АНТОНОВ.

Ялти активистка

ИШЛЕИ. Ыхракассинчи «Стахановец» колхоз членĕ Мавра Никифорова çĕнĕ заема 50 тенкĕлĕх çырăнса илчĕ. М. Никифорова колхозницăн виçĕ ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта, халĕ вăл килте 13 çулхи хĕрачипе тата вунă çулхи ывăл ачипе пурăнать.

М. Никифорова çамрăк мар пулин те колхоз производствинче лайăх ĕçлет, обществăллă ĕçе активлăн хутшăнать. Иртнĕ çулта 150 ĕçкунĕ тунă, кăçал 50 ĕçкунĕнчен ирттернĕ.

М. ГАЛКИНА.

ССР Союзĕпе Япони хушшинчи суту-илӳ килĕшӳĕн тата таварçаврăнăшпе тӳлевсем çинчен тумалли килĕшӳн проектне çирĕплетни

ССР Союзĕпе Япони хушшинче суту-илӳ килĕшӳĕ, çавăн пекех тата таварçаврăнăшпе тӳлевсем çинчен килĕшӳ тăвас шутпа, кăçалхи февралĕн 17-мĕшĕнче СССР Тулашри Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ Микоян юлташпа Японин ССР Союзĕнчи Посолĕ г-н Татекава хушшинче калаçусем пулнă. Çак калаçусем пĕр-пĕрне уступкăсем тунă никĕс çинче ăнăçлăн пулса иртнĕ. Калаçусем хыççăн июнĕн 11-мĕшĕнче çӳлте асăннă икĕ килĕшӳ проектне çирĕплетнĕ.

Шурă тинĕс пăрĕсем хушшинче кимĕсемпе

Шурă тинĕсре çуркунне тискер кайăксем тытнă вăхăтра пăрçĕмрен пароход гренландски тюленьсем выртакан пăр патне пынă. Унта тюленьсене нумай тытнă, анчах та вĕсене судно çине хăпартма май килмен. Кĕтмен çĕртен пуçланнă çил пăрсене хускатса янă. Çынсем пароход çине тавăрăнма васкана. Шторм иртнĕ хыççăн, вĕлернĕ тюленьсем юлнă пăр курăнман. Ана шыранă, анчах тупаймăн.

Çакăн çинчен Мезенск районĕнчи çыранра тюлень тытакан колхозниксем пĕлнĕ. Вĕсем çав пăра шыраса тупма шут тытнă. Колхозниксен группи кимĕсем çине ларса тинĕсе тухса кайнă. Вĕсем Шурă тинĕс пăрĕсем хушшинче темиçе талăк ирттернĕ. Çак кунсенче колхозниксем чиперех каялла тавăрăннă. Вĕсем пăрçĕмрен пароход çинчи çынсем вĕлернĕ тюленьсене кимĕсем çинче турттарса пынă.

Граждăнла сывлăш флотĕнчи парашютистсен Пĕтĕм Союзри сборĕнче

ТАШКЕНТ, июнĕн 11-мĕш. (ТАСС). Граждăнла сывлăш флотĕнчи парашютистсен Пĕтĕм Союзри сборĕнчи занятисен программи тăрăх паян парашюта уçмасăр 5 секунда хушши вĕçсе анмалла сикнĕ. Сбор участникĕсем Сталинла премин лауреачĕ Лобанов юлташ конструкцилеменĕ парашютсемпе сикнĕ. Паян сывлăшра пирвайхи хут тĕрĕслесе пăхнă çак парашютсем питех те лайăх пахалăхлă пулни палăрнă.

Сбор начальникĕ Шукин юлташ парашютистсем çĕр çине пысăк ăсталăхпа анса ларма пĕлнине паллă тунă. Çывăх хунсенчех сбор участникĕсем группăсемпе сикме пуçласçĕ.

ФЗО шкулĕсене вĕренме илмелли призывăн 5 кун хушшинчи итогĕсем

Союзлă 15 республикăра ФЗО шкулĕсене вĕренме илмелли призыв пырать. Июнĕн 11-мĕшĕнче Ĕç вăйĕсен резервисен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнăй Управленийĕ призыв мĕнле пыни çинчен тата ФЗО шкулĕсене декабрь уйăхĕнче илнĕ, халĕ вĕренсе тухнă çамрăксене предприятисем тăрăх вырнаçтарни çинчен Пĕтĕм Союзĕпе радиокanашлу туса ирттернĕ.

Вырăнсенчен пĕлтернĕ тăрăх, черетлĕ призыв организованно иртсе пырать. Хуларипе ялти çамрăксем массăллă профессисене вĕренме хапăл тусах каяççĕ. Призыв комиссийĕсене вуншар пин çамрăксем, хăйсене шкулсене илме ыйтса, заявленисем панă.

Молотов облаçĕнчи мĕнпур призыв комиссийĕсем — 58 комисси — июнĕн 5-мĕшĕнче ирхине 9—10 сехетре ĕçлеме пуçланă. Вĕсем, туллимар сведенисем тăрăх, 3 пине яхăн заявленипе çыпăрусем илнĕ. 5 кун хушшинче облаçри ФЗО шкулĕсене призыв йĕркипе 4.567 çын илнĕ е вăл палăртса çирĕплетнĕ контингентăн 92,8 проценчĕ пулать. Вĕренме илнисем хушшинче комсомолецсем 1.700 çын ытла шутланаççĕ. 38 районра призыв пĕтнĕ те ĕнтĕ.

Украинăри 35 пин ытла çамрăксем ФЗО шкулĕсене кайма путевкăсем илнĕ. Хабаровск крайĕнче, Чечено-Ингуш АССР Республикинче, Новосибирск, Ростов, Свердловск облаçĕсемпе ытти облаçсенче призыв ăнăçлă пулса пырать.

ФЗО шкулĕсене вĕренме илмелли призыв пирвайхи хут пуçланнă Литва, Латви тата Эстони республикисенчи призыв пункчĕсенче хĕрӳллĕ ĕç пырать. Советлă çамрăк республикăсенчи çамрăксемпе çитĕннĕ сынсем фабрикăпа завод ĕçне вĕренмелли шкулсене питех те юратаççĕ. Латви республикинчи вулăссенчи комиссисене тăваттăпине яхăн заявленипе çыпăрусем илнĕ. Пирвайхи 5 кун хушшинче республикăра контингентăн çурри ытларах пайне — 5.167 çынна — вĕренме илсе шкулсене янă. Литва СС Республикинче 3 пине яхăн çамрăка вĕренме илнĕ. Кунта призывника комиссийĕсене 5 пин заявленипе пынă.

Анчах та призыв комиссийĕсен ĕçлепур çĕрте те мар кирлĕ пек лайăх организациленĕ. Хăшпĕр республикăсенчи облаçсенче иртнĕ вăхăтри йышăнăва тепĕр хут тăваççĕ, доброволецсем вĕçĕ-хĕррисĕр нумай пухăнаççĕ, призыв пуçламалли вăхăтĕрлĕ сăлтавсемпе малалла тăсаççĕ. Сăмахран, Чита облаçĕнче призывçне халĕ кăна пуçлаççĕ-ха. Казах СС Республикинчи ĕç вăйĕсен резервисен управленийĕ 6 облаçран призыв пирĕн халĕ те сведенисем илмен.

Ĕç вăйĕсен резервисен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнăй Управленийĕ республикăсемпе облаçсенчи управленисене призыв йĕркине вăхăрах анлăн сарса яма хушнă. Çак ĕç кирлĕ пек лайăх, правительство пулăртса панă сроксенче туса ирттермелле.

Туллимар сведенисем тăрăх июнĕн 10-мĕш тĕлне союзлă 15 республикăра ФЗО шкулĕсене призыв йĕркипе 1 пин ытла çамрăка вĕренме илнĕ.

* * *

Ĕç вăйĕсен резервисен хулаçенчи облаçсенчи, крайсенчи тата республикăсенчи Управленийĕсен работникĕсем ФЗО шкулĕсене декабрь уйăхĕнче илнĕ, халĕ вĕренсе тухнă çамрăксене предприятисем тăрăх вырнаçтарни çинчен пĕлтернĕ. Нумай крайсемпе облаçсенче шкулсенчен вĕренсе тухнă çамрăксене пурне те ĕçе янă (Молотов, Ростов облаçĕсем, Хабаровск, Красноярск крайĕсем т. ыт. те). Ленинград, ФЗО шкулĕсенчен вĕренсе тухнă 8 пине яхăн çамрăк ĕçе тухса кайнă. Вырăнсенчи предприятисенче çамрăк рабочисене мĕнле кĕтсе илнине, вĕсене производствăра тĕрĕс усă курмашкăн вĕсем валли пурăнмалли условисене мĕнле туса панине тĕрĕслеме тытăнни.

Июнĕн 11-мĕш. (ТАСС).

Çамрăксем ФЗО шкулĕсене вĕренме каяççĕ

ШАХАСАН. Çак кунсенче çамрăксене ФЗО шкулĕсене вĕренме илес тĕлĕшпе призыв пулса иртрĕ. Колхоз çамрăксем фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсене хаваслăн каяççĕ. «Красный Октябрь» колхозран призыва 24 çамрăк кĕрсе тухнă, вĕсенче 19 çамрăк фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли шкула кайма юрăхлă пулнă.

Районĕпе 170 çамрăка ФЗО шкулсене илнĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ комсомолецсем.

А. СОЛОВЬЕВ.

РСФСР Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн работникĕсен активĕн канашлăвĕ

Виçĕ кун хушши ĕçленĕ хыççăн июнĕн 11-мĕшĕнче РСФСР Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн производствăпа хуçалăх активĕн канашлăвĕ вĕçленнĕ. Канашлу СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви туса кăларассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен сӳтсе-явнă.

РСФСР Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕн Смиряев юлташăн доклачĕ тăрăх хĕрӳллĕ пренисем пуçланнă. Облместпромсен, райпромкомбинатсен, фабрикăсемпе заводсен представителĕсем 5 уйăх хушшинче тунă ĕçсем çинчен каласа панă. Çĕнĕрен нумай предприятисем уçнă. Вырăнти промышленноçăн производствăри пысăк резервсем тата чĕртавар ресурсĕсем пур, анчах та вĕсемпе çителĕклĕ усă курмаççĕ-ха.

Канашлу участникĕсем Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн территориальнăй отделĕсемпе техникăлă отделне хытă критикленĕ, мĕншĕн тесен вĕсем оперативлă ĕçлемеççĕ, çамрăк предприятисемпе комбинатсене начар пулăшаççĕ. Москворецки район промтрест тата Ленинградри «Новый строитель» завод детальсене никельлă сутатас вырăнне, йӳнĕрех лараканнисене тодпа усă курма пуçланă. Çак метод ытти предприятисене сарас тĕлĕшпе техникăллă отдел нимĕн те туман.

Вырăнти чĕртаварпа начар усă кураççĕ. Вырăнти организацисен пĕрпайĕ, халичченхи пекех, пуринчен ытларах централизованнăй снабжение çине шанса тăрать. Орелри облместпром, сăмахран, Наркомместпромран хăйне валли улăм тата ыхра ярса памалли, Архангельск облместпромĕ йывăр уйăрса пама ыйтать т. ыт. те.

Канашлура РСФСР Совнаркомĕн Председателĕ Хохлов юлташ сăмах тухса калланă.

Канашлу участникĕсем Сталин юлташ патне салам янă.

(ТАСС).

Чăваш АССР колхозсенче июнĕн 10-мĕш тĕлне çураки мĕнле пынине кăтартакан сводка

(Процентпа)

Районсем	Пĕтĕмĕ çуртри акнă	ВĂЛШУГРАН Тĕштăрăсемпе пăрса йышши культурăсем	Çĕрулми	Йĕтĕн-долгунец	Кантăр	Пĕр çул ӳсекен курăксем	Вылăх кăшманăсемпе силос культурисем	Пĕтĕмпе Пачаçăмăсем
Улатăр	83,5	91,2	30,3	46,0	—	141,7	50,9	31,5
Элĕк	99,3	102,8	88,3	—	93,5	86,2	58,7	77,5
Вăрнар	96,0	100,1	89,5	77,5	105,0	89,0	96,9	64,2
Йĕпреç	96,1	106,5	65,2	32,2	70,0	70,7	70,2	18,6
Ишлей	96,6	102,0	85,5	—	89,0	65,5	58,2	74,3
Калинински	98,7	103,1	93,8	—	105,3	88,7	145,1	79,1
Канаш	99,9	104,9	86,9	—	93,7	65,9	57,4	55,5
Куславкка	96,9	100,6	86,7	—	—	36,5	71,0	26,9
Комсомольски	102,6	103,5	92,4	—	99,2	95,6	100,0	77,6
Красноармейски	98,0	102,1	54,8	—	47,9	86,7	86,0	81,2
Хĕрлĕ Чутай	99,0	105,5	84,7	40,0	58,4	99,3	70,5	77,7
Кувакино	90,9	96,9	45,1	83,1	—	63,3	77,2	37,1
Сĕнтĕрвăрри	96,7	104,9	84,8	—	—	84,6	27,3	29,1
Октябрьски	100,0	103,9	96,9	—	69,0	60,6	60,0	57,5
Первомайски	98,8	102,8	102,0	87,0	135,2	33,6	94,3	34,0
Пăрачкав	92,1	97,6	98,7	91,9	—	20,3	63,7	78,8
Советски	98,4	102,1	88,7	—	86,2	91,1	63,4	41,3
Çĕнтĕр	99,0	104,2	81,3	—	10,0	207,2	59,3	26,4
Вăрмар	104,3	106,1	95,6	—	100,0	100,0	110,0	34,0
Çĕрпӳ	99,0	100,7	104,7	—	94,0	90,0	72,1	47,2
Шупашкар	93,9	100,3	92,6	—	38,7	50,4	64,4	24,0
Чкаловски	103,4	106,3	77,0	—	100,0	82,7	111,4	53,7
Шăмăршă	96,8	101,7	60,0	—	64,0	84,7	56,5	38,1
Шăхасан	98,4	102,7	89,1	—	81,6	72,9	82,6	44,6
Çĕмĕрле	96,5	102,5	93,2	90,0	88,3	85,9	55,4	19,4
Етĕрне	96,2	101,2	91,7	67,0	58,4	101,1	49,1	13,0
Елчĕк	98,8	102,6	87,2	—	97,6	78,0	85,3	48,3
Тăвай	99,0	100,1	96,8	—	72,1	103,3	96,6	70,0
Шупашкар хули	90,2	110,0	101,6	—	—	64,0	100,0	73,3
ЧАССР тăрăх	97,7	102,1	88,0	75,6	80,3	82,2	74,1	46,2

Кадрсен экономикăллă образованине пулăшма

Промышленность предприятийĕн балансĕ тата ăна анализ тăвасси

1. Мĕн вăл баланс

Социализмлă предприятин ĕçĕсем хулăх расчечĕн никĕсĕсем çинче пулпырăççĕ. Хозрасчет принципĕсем çăрăх, государствăн кашни предприятинех, ăна производство ĕçĕсене йĕркеллĕ туса пыма мĕн чухлĕ кирлине тупа, паллă вăсе чухлĕ средствăсем çуртсем, машинăсем, сооруженисем, инструментсем, чĕртăвар, топливо тата ытти материалсем те) уйăрса параççĕ. Производство процесăнче чĕртавара тата ытти материала ĕçлесе полуфабрикатсем тата хатĕр изделисем туса лараççĕ. Çав мĕнпур япаласене япаха халлĕн хисепе илнисĕр пуçне, çавăн пекех укçан та хисепе илеççĕ. Предприяти средствисен мĕнпур суммипредприятин средствисем мĕнле майпа пани, çав средствăсене ăçтан илни тĕлĕшпе те уйăмăн шутланса тăраççĕ.

Предприяти аллинчи мĕнпур средствăсене, çапла вара, икĕ паллă тăрăх: вĕсем мĕнле япаласенчен пулса тăнине кура тата вĕсене ăçтан илнине кура хисепе илсе пыраççĕ.

Предприяти балансĕ — пĕр-пĕр паллă кун тĕлне предприятин средствисем мĕнле тăнине укçан хисеплесе кăтартни шулать. Баланс предприятин средствисене пĕр вăхăтрах икĕ паллă тăрăх: а) **средствăсен составĕ тата вĕсене мĕнле вырнаçтарни тăрăх, б) средствăсем камăннине, вĕсене ăçтан илнине кăтартса пани тăрăх** хисепе илет.

Предприятин пĕтĕм ĕçĕсене ертсе пырас çĕрте баланс пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл — производствăна оперативлă ертсе пыма, плансене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăма кирлĕ чи паха инструментсенчен пĕри. Отчетсене тата баланса сăнаса вĕренес пулать,—ку вăл ВКП(б) XVIII конференцийĕ йышăннă решение пурнăçа кĕртсе пыма уйăрмах кирлĕ: «...предприятин экономика тĕлĕшĕнчи ĕçне çакăн пек туса пымалла: хăйне ларакан хак тĕлĕшпе тата тупăш илес тĕлĕшпе тунă плансем пĕтĕмпех пурнăçа кĕчĕр» (ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăнă резолюцирен).

2. Балансăн разделĕсем тата уйăрăм статьисем мĕне кăтартса тăраççĕ

Предприяти балансне таблицăсем пек çырса тăваççĕ, унăн сулахай енĕ балансăн **активне**, сылтăм енĕ—балансăн **пассивне** кăтартать.

Балансăн активĕнче предприятин средствисене вĕсен составĕ тата вĕсене мĕнле вырнаçтарни тăрăх группăсене пĕтĕçтереççĕ, балансăн пассивĕнче—предприятин средствисене вĕсем камăнни, вĕсене ăçтан илни тăрăх группăсене пĕтĕçтереççĕ. Активăн итогĕ тата пассивăн итогĕ яланах пĕртан, мĕншĕн тесен вĕсем средствăсен пĕр хисеплех, анчах икĕ тĕрлĕ енчен кăтартса параççĕ

БАЛАНС ПРЕДПРИЯТИЯ (в тыс. руб.)

АКТИВ	На начало года	На конец года
А. Основные и отвлеченные средства		
I. Основные средства	11.000	11.700
II. Отвлеченные средства		
1) Взносы в НКФ из прибылей	—	200
2) „ в Промбанк	—	—
III. Отчисления в фонд директора	—	45
Итого по группе „А"	11.000	11.945
Б. Нормируемые средства	Норматив на конец года: сумма	дни
I. Сырье, основные материалы	1600	72	2.050	2.600
II. Вспомогательные материалы	250	108	355	500
III. Топливо	50	50	45	40
IV. Малоценные и быстроизнашиваемые предметы	3200	—	2.500	2.610
V. Незаверш. производство и полуфабрикаты	4000	66	3.800	5.300
VI. Готовая продукция	750	12	800	900
VII. Расходы будущих отчетн. периодов	700	—	500	600
Всего по группе „Б"	10550	—	10.050	12.550
В. Средства в капитальном ремонте		—		50
Г. Средства в расчетах и проч. активах				
I. Товары отгруженные		300		600
II. Денежные средства		350		150
III. Расчеты (дебиторы)		425		55
IV. Внутрен. расчеты со строительством		175		200
Всего по группе „Г"		1.250		1.505
БАЛАНС		22.300		26.050

ПАССИВ	На начало года	На конец года
А.		
I. Уставный фонд	20.800	22.200
II. Прибыль текущего года	—	1.050
III. Рабочие и служащие	300	350
Всего по группе „А"	21.100	23.600
Наличие собств. оборотных и приравненных к ним средств (в подсчет баланса не входит) на начало года—9.925 тыс. руб. на конец года—11.455 тыс. руб.		
Б. Краткосрочные банковские кредиты под нормируемые запасы:		
I. Ссуды под сырье и материалы	600	1.000
II. „ „ незавершен. производство	—	250
III. „ „ готовые изделия	—	150
Всего по группе „Б"	600	1.400
В. Средства для капитального ремонта	—	50
Г. Прочие пассивы:		
I. Ссуды Госбанка на суммы в пути	200	300
II. Фонд директора	30	20
III. Расчеты (кредиторы)	370	680
Всего по группе „Г"	600	1.000
БАЛАНС	22.300	26.050
Забалансовые статьи:		
Износ основных средств	2.000	2.500

Балансăн тĕп разделĕсемпе статьине пăхса тухăпăр. Вĕсене баланс таблицинче мĕнле йĕркепе вырнаçтарни (таблицине пăхăр), эпир те çав йĕркепех пăхса тухăпăр. (Таблицăна анализа илме çăмăлрах пултăр тесе, баланс таблицине эпир чылаях кĕскетнĕ, анчах разделсене тата тĕп статьясене пурне те таблицăра хăварнă).

Активăн «А» разделĕ предприятин **ытти тата отвлеченнăй средствисене** кăтартса тăрать. Предприятин тĕп средствисем — вĕсем предприятие нумай вăхăтлăха панă средствăсем: суртсем, машинăсем, инструментсем, сооруженисем т. ыт. те. Тĕп средствăсен пысăкшăмăнчен предприяти техникăпа пин таран аваpланнин виçинĕ курăнса çырать. Промышленноçлă предприятин балансĕнче тĕп средствăсен, баланссен ытти статьисемпе танлаштарăн, пысăкрах вырăн йышăнса тăраççĕ. Эпир илсе кăтартакан баланса тĕп средствăсем—11.700 пин тенкĕ, баланс тăрăпе танлаштрасан вăл 45 процент çитет.

Çак «А» разделрах пĕрремĕшпе иккĕмĕш статьисенче «отвлеченнăй средствăсем» тенĕн средствăсене тата директор фондне валли уйăрса панине, урăхла каласан, каялла тавăрăнакан взноссене тата тупăшран уйăрса панисене кăтартнă. Ку статьясен содержанине каяpаха, предприятин тупăшăсем çинчен тата çак тупăшсем тата каясси çинчен ăнлантарса панă пăхса тухăпăр. Çапла ĕнтĕ балансăн «А» разделĕ предприятин производствăлла тĕп фончĕсенче нумай вăхăтлăха вырнаçса тăракан средствăсене тата çак хуçалăхран тухса кайнă средствăсене кăтартса тăрать.

Малалла балансăн «Б» разделĕ каять. **Ку разделра оборотри средствăсене** кăтартса панă. Оборотри средствăсен чи пысăк пайĕ — чĕртавар, ĕçлеме пулăкан материалсем, топливо т. ыт. те, çисен запасĕсем ĕçлесе полуфабрикатсем тата хатĕр изделисем туса кăларăм май сахалланса пыраççĕ. Хатĕр изделисене сутасçĕ, вĕсен вырăнне укçа илет. Çав вăхăтрах предприяти, заготовкăсем туса, чĕртаварсемпе ытти материалсен расхода тухнă пайĕ вырăнне çĕнĕрен илсе тăрать. Чĕртаварсем, материалсем, туса пĕтермен изделисем тата хатĕр изделисем мĕн чухлĕ пуллине предприятин планĕнче çирĕплетнĕ кăтартса панă. Предприятин чăкалла мар яланхи запасĕсем, производство ĕçне йĕркеллĕ туса пыма кирлĕ чи пĕчĕк хисеп чухлĕ пулакан запассем,—**нормативсем** пулса тăраççĕ. Çулленхи оперативлă ĕçе туса пынă тухне, предприятин производстви вăй-вăхăчĕпе усă май, татах кушса çитеттăкăсем тумалла килет, çавна валли татах средствăсем кирлĕ пулаççĕ. Çавăн пек вăхăт-вăхăтĕпе, сезонренче тăвакан запассене те норма тăрăх тăваççĕ, урăхла каласан, çав запассем мĕн чухлĕ пулмаллине малтанах план тăрăх кăтартса хураççĕ. Балансăн «Б» разделĕнче справкăлă икĕ графа пур. Çав графасенче пиншер тенкĕпе запассен çулталăк вĕçĕнчи нормативăн суммине тата норма тăрăх паракан кашни тĕрлĕ средствăсен кулленхи нормин суммине кăтартса панă. Эпир пăхса тухакан баланспа запассен нормативĕн суммине 10.550 пин тенкĕ пулмалла тунă. Çав мĕнпур материалсене — таварсене (запассене) уйăрăмăн илсе кăтартаççĕ, вĕсем балансăн активĕнче уйăрăм раздел — **нормăланă средствăсем** тенĕн «Б» раздел пулса тăраççĕ. Эпир пăхса тухакан баланспа нормăланă средствăсем çулталăк пуçламĕшĕнче 10.050 пин тенкĕ, çулталăк вĕçĕнче—12.550 пин тенкĕ пулнă.

Предприятин тĕп средствисем (çуртсем, машинăсем т. ыт. те) производство ĕçленĕ вăхăтра якалса (пĕтсе) пыраççĕ. Вĕсен хакне предприяти туса кăларакан продукци хакĕ çине, амортизаци валли уйăрса парса, пайăн-пайăн кĕртсе пыраççĕ.

Амортизаци валли уйăрса панисем пухăннипе пулакан средствăсем ятарласах икĕ ĕç валли каяççĕ. Вĕсен пĕр пайне—60 процента яхăн—Промбанка хывaççĕ, çак средствăсемпе государство çĕнĕ капитальнăй строительство валли усă курать. Амортизаци валли уйăрса панă средствăсен тепĕр пайĕ çак предприятирех капитальнăй ремонтсене валли укçа-тенкĕ парас çĕре каять, çав средствăсем ятарласах çак ĕçе тумалли фонд пулса тăраççĕ. Ку средствăсене, вĕсене пĕр паллă ĕçе тума ятарласах уйăрнă пирки, предприятин производствăллă тĕп ĕçĕнчи пĕрлехи оборота кĕртсе яма юрамасть. Çавăнпа ĕнтĕ ку средствăсене **капитальнăй ремонтри средствăсем** ятлă «В» разделра кăтартаççĕ. Эпир пăхса тухакан баланспа çак средствăсен сумми çулталăк вĕçĕ тĕлне 50 пин тенкĕ пулнă.

Баланс активĕн юлашки—«Г» тенĕн—разделĕнче предприятин **ытти оборот средствисене тата расчечĕсене** кăтартнă. Çак средствăсем «Б» разделра кăтартнă средствăсенчен сахăнпа уйăрăм: «Г» разделри средствăсен юлашкийĕ мĕн чухлĕ пулмаллине предприятин планĕ тăрăх нормăланаççĕ. «Г» разделра тиесе янă таварсене тата товар илекен вĕсемшĕн тӳлемен таварсене кăтартаççĕ; çак статьясем тăрăх сумма юлашки мĕн чухлĕ пулмаллине нормăланаççĕ, тиесе янă таварсемшĕн Госбанк предприятие, таварсене мĕн чухлĕ тиесе янине кура, товар тиесе яни çинчен халакан документсене пăхса ссудăсем тарать. Эпир пăхса тухакан баланспа тиесе янă таварсем çулталăк вĕçĕ тĕлне 900 пин тенкĕлĕх пулнă. Балансăн çак разделĕнчех, II статьяра, предприятин укçа—предприятин кассинче тата банкри расчетнăй счет çинче—мĕн чухлĕ пуррине кăтартса панă. Çулталăк вĕçĕ тĕлне çак предприятин 150 пин тенкĕ укçа пулнă.

«Г» разделра дебиторсем, урăхла каласан, предприятие тӳлеме тивĕслисем пысăк статья пулса тăраççĕ. Дебиторсен статьине çаксене кĕртеççĕ: илнĕ таварăшăн тӳлесе татманнисене, поставщиксене — вĕсенчен шыраса илмеллисене, пăхса тухма арбитража е суда панă тавлашуллă парăмсене т. ыт. те. Эпир пăхса тухакан баланс таблицинче, баланс пĕчĕкрех пултăр тесе, дебиторсен уйăрăм категорийĕсене уйăмăн илсе кăтартман. Ку баланс тăрăх дебиторсемпе расчет тумалли статья çулталăк вĕçĕ тĕлне мĕнпурĕ 555 пин тенкĕ пулнă.

«Г» разделра предприяти хăйĕн капитальнăй строительствине тăвакан расчетсене уйăрăм статьяпа кăтартнă, çав расчетсем эпир пăхса тухакан баланспа 200 пин тенкĕ пулнă.

Предприяти средствисене ăçтан илнине, урăхла каласан, балансăн пассивне пăхса тухма тытăнатпăр. Балансăн пассивĕнче те, активĕнчи пекех, тăвата раздел. Эпир ĕнтĕ пĕлетпĕр: балансăн пассивĕ предприяти хăйĕн аллинчи средствăсене ăçтан илнине, предприятин хăйĕн средствисем тата вăхăтлăха илнĕ средствăсем мĕн чухлĕ пуррине кăтартса тăрать. Пассивăн «А» разделне пăхса тухассинчен, пуçлăпăр. Предприятие, хуçалăхпа производство ĕçĕсене йĕркеллĕн туса пыма, государство панă средствăсен — тĕп средствăсен тата оборотри средствăсен суммине предприятин уставне çырса хураççĕ, ăна **уставри фонд** теççĕ (пассивăн «А» разделĕ). Уставри фонд —предприяти средствисен тĕп çăлкуçĕ пулса тăрать. Эпир пăхса тухакан балансра çулталăк вĕçĕ тĕлне предприятин балансри мĕнпур средствисем 26.050 пин тенкĕ пулнă пулсан, уставри фонд 22.200 пин тенкĕ, урăхла каласан, предприятин мĕнпур средствисен 85 проценчĕ пулнă.

Предприятин финанс средствисен тепĕр пысăк çăлкуçĕ—унăн хăйĕн **накопленийĕсем** пулаççĕ. Тавар сутса илнĕ суммăран продукцин хăйне ларнă хакне тата оборот тăрăх налог тӳленине катсан, вара предприятин тупăшĕ пулать.

Предприятин тупăшĕ çакăн пек пайланать:

а) 10 процентран сахал мар хисепĕ госбюджета каять;

б) паллă процент чухлĕ директор фондне каять;

в) предприятин хăйĕн оборот средствисене пысăклатма каять тата

г) Промбанка предприятин капитальнăй строительствине укçа-тенкĕ парса тăма каять.

Баланс активĕн «А» разделне пăхса тухнă чухнех курнăччĕ, бюджета (тупăшран Финанс Халăх Комиссариачĕ валли хывакан взноссем) тата Промбанка каялла илмелле мар хывнă взноссем, çавăн пекех директор фондне уйăрса панисем те отвлеченнăй средствăсем пулса тăраççĕ. Çак средствăсене предприятин балансĕнчен çавă баланса çирĕплетиччен кăлармаççĕ, вĕсем, пассивра кăтартнă тупăш суммине тӳрлетмелли (унтан катмалли) пулса, балансăн активĕнче шутланса тăраççĕ.

Пирĕн баланспа отчетлă çулталăкри тупăш 1050 пин тенкĕ пулнă. Çак тупăшран бюджета 200 пин тенкĕ хывнă тата директор фондне 45 пин тенкĕ уйăрса панă. Эпир пăхса тухакан предприяти капитальнăй вложенисем валли Промбанка укçа хывман. Директор фондне миçе процент уйăрса панине пĕлсе тăрса (директор фондне план тăрăх кăтартнă тупăш сумминчен 2 процент, планра кăтартнинчен ытларах илнĕ тупăш сумминчен 50 процент уйăрса параççĕ), эпир ĕнтĕ çак баланс тăрăх планра кăтартнинчен ытларах хулнă тупăш пуррине тата унăн пысăкăшне те пĕлме пултаратпăр.

Пассивăн «А» разделĕнче çавăн пекех тата — рабочисемпе служащисем тĕкĕн статья пур. Çак статьяра рабочисемпе служащисене четрети тӳлевре ĕçукçи памалли суммăна кăтартнă (ку разделрах уйăрăм статьяпа,—ăна эпир илсе кăтартман,—ĕçукçи сумминчен соцстраха уйăрса паракан суммăна кăтартаççĕ). Мĕншĕн-ха ĕçукçи суммине балансăн пассивĕнче кăтартнă? Пурте пĕлеççĕ, ĕçукçи вăл продукцин тата туса çитереймен производствăн хăйне ларакан хакĕн составне кĕрет. Анчах ĕçукçине рабочи ĕçленĕ кунах тӳлесе татмаççĕ. Ĕçукçине тӳлесе татас вăхăтчен çав ĕçукçи сумми рабочисемпе служащисем вăхăтлăха, черетлĕ тӳлев кунĕчен, предприятие панă пек шутланса тăрать. Ĕçукçи тӳлес срок çитиччен ĕçукçи сумми предприятин оборотĕнче çӳрет, çапла вăл предприяти средство илсе тăракан çăлкуç пулать. Пирĕн баланспа икĕ ĕрнери ĕçукçин пĕтĕм суммăн—350 пин тенкĕ. Çапла вара, кун пек сумма предприяти аллинче яланах пур. Çак яланах пулакан сумма предприятин хăйĕн оборотри средствисемпе пĕртанах шутланать. Вăтам шутпа çак сумма 6—7 кунхи ĕçукçи сумми чухлĕ пулать. Ку суммăна балансра справка пек илсе кăтартаççĕ.

Уставри фонд, тупăш тата ĕçукçи (ĕçукçин эпир кăтартнă пайĕ)—**предприятин хăйĕн тата хăйĕннипе пĕртанах шутланакан средствисем** пулса тăраççĕ; çак енчен пăхса вĕсене балансăн пассивĕнче унăн «А» текен пĕрремĕш разделне кĕртнĕ.

Халĕ ĕнтĕ эпир предприятин хăйĕн тата хăйĕннипе пĕртанах шутланакан **оборот** средствисем мĕн чухлĕ пуррине пĕлме пултаратпăр.

Тĕп тата отвлеченнăй средствăсене (активăн «А» разделĕ) предприятин хăйĕн средствисемпе кăна витме юрать, урăх çĕртен илнĕ средствăсемпе витме юрамасть, мĕншĕн тесен пирĕн промышленноçра çакна валли средствăсем кивçен илес йĕрке пулмалла мар тунă.

Çапла ĕнтĕ, предприятин хăйĕн тата **хăйĕннипе** пĕртанах шутланакан средствăсен сумминчен предприятин тĕп-тата отвлеченнăй средствисене витме каякан суммăна катсан, вара предприятин **хăйĕн тата хăйĕннипе пĕртанах шутланакан оборот средствисен** пысăкăшне пĕлетпĕр. Çак суммăна балансра уйăрăм справкăпа («А» раздел айĕнче) кăтартаççĕ. Пирĕн баланспа ку сумма çулталăк пуçламĕшĕ тĕлĕнче 9925 пин тенкĕ, çулталăк вĕçĕ тĕлне—11455 пин тенкĕ пулнă; ку сумма çакăн пек пулса тăрать: (22200 пин+1050 пин+150 пин) — (11700 пин+245 пин) =11455 пин тенкĕ.

Пассивăн «Б» разделĕнче предприятие пĕр-пĕр ĕç валли Госбанк кĕске срокăпа каялла тавăрмалла панă ссудăсене кăтартаççĕ, — çав ссудăсемпе усă курса предприяти чĕртаварсен, материалсен тата ытти сезонлă запасĕсене тунă, çав ссудăсемпех производствăн вăхăтлăх нушисене валли те усă курнă. Баланспа çав ссудăсене вĕсем мĕнле ссудăсем пулса тăни тăрăх уйăрăмăн кăтартнă. Пирĕн баланспа кун пек ссудăсен итогĕ 1400 пин тенкĕ.

Пассивăн «В» разделĕнче капитальнăй ремонт ĕçĕсене тума уйăрнă средствăсене ăçтан илнине кăтартнă. Çав средствăсем,—ун çинчен эпир малараххи кăтартса панăччĕ,—амортизационнăй фонда уйăрса панисенчен, Госбанкран ятарласах илнĕ кредитсенчен, подрядчиксене памалли средствăсенчен т. ыт. те пулса тăраççĕ. Çак средствăсем пирĕн баланспа 50 пин тенкĕ, вĕсене пĕр суммăна кăтартнă.

Пассивăн юлашки разделĕ—«Г» раздел,—тиесе янă таварсемшĕн Госбанкран илнĕ ссудăсемсĕр («çул çинчи суммăсемшĕн илнĕ кредитсемсĕр») пуçне, кредиторсемпе тăвакан расчетсене те, урăхла каласан, предприятисемпе организацисене, вĕсемпе тĕрлĕрен хуçалăхлă операцисем тунă май, тӳлемелли суммăсене кăтартса тăрать.

Çак разделрах директор фондĕнчи расходланса пĕтмесĕр юлнă суммăна та кăтартнă, вăл—20 пин тенкĕ. Эпир пăхса тухакан баланспа, кĕскетсе тунă баланспа, предприяти «Г» раздел тăрăх илнĕ мĕнпур средствăсен сумми 1000 пин тенкĕ шутланать.

Предприятисен яланхи балансĕсенче пассивăн çак «Г» разделĕнчех кредиторсен статьи тăрăх **кредиторсен** уйăрăм статьисем, сăмахран, çакăн пек статьясем пулаççĕ: акцептованнăй счетсем тăрăх материалсем тăратаканнисем, НКФ бюджета памалли тӳлевсем тăрăх т. ыт. те. Çак статьясене пассивра уйăрăмăн палăртса кăтартни ака мĕнрен килет: нумай мар вăхăт хушши—поставщик тăратнă материалсемшĕн унăн счечĕсене тӳлесе татиччен тата оборотран илекен налога бюджета парса татиччен темиçе кун хушши — акцептованнăй счетсем тăрăх материалсем тăратакан поставщиксем тата Финанс Халăх Комиссариачĕ предприяти кредиторĕсем пулса тăраççĕ.

Баланс хыççăн ятарласах уйăрăм статья пулать—тĕп средствăсем ĕçре кивелни. Вăл актив тăрăх тĕп средствăсен амортизациленĕ пайĕ тата пассив тăрăх уставри фонд пулса тăрать тата çаксене кăтартса парать: пĕрремĕшĕнчен, тĕп средствăсен малтанхи хакне амортизапи урлă мĕн чухлĕ витнине, иккĕмĕшĕнчен—çакна май уставри фонд мĕн чухлĕ чакнине кăтартса парать.

Пирĕн баланс тăрăх çулталăк вĕçĕ тĕлне тĕп средствăсем якалса пĕтни 2500 тенкĕлĕх шутланать. Çапла ĕнтĕ, тĕп средствăсен малтанхи тулли хакĕ (якалса пĕтнине шута илмесĕр) 1420 пин тенкĕ шутланать (баланс тăрăх 11700 пин тенкĕ+баланс хыççăн 2500 пин тенкĕ).

Промышленноçлă предприяти балансĕн разделĕсемпе тĕп статьисен характеристики тĕпрен илсен çакнашкал ĕнтĕ. Эпир балансăн уйăрăм статьисем пĕр паллă хуçалăхлă-производствăллă процессемпе тӳрĕмех çыхăнса тăнине куратпăр. Отчета тата баланса анализ туса пăхнипе предприятин мĕнпур ĕçĕ тăрăх финанс результатĕсене палартма, плана тултарма тата иртерсе тултарма кирлĕ оперативлă мерăсене йышăнма май пулать.

3. Баланс тăрăх предприяти средствисене мĕнле палăртаççĕ

Халĕ ĕнтĕ предприяти хăйăн аллинчи средствăсемпе мĕнтери тĕрĕс тата рационально усă курнине анализ туса пăхăпăр. Çакнашкал анализ пире эпир пăхса тухакан предприятин хуçалăхпа финанс ĕçĕнче мĕнле çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем пуррине, ĕçе лайăхлатма мĕнле мерăсем йышăнма кирлине палăртма май парать. Пĕрремĕшĕнчен, предприятири финанс ĕçĕсем мĕнлине тата отчетлă тапхăрта ĕçе кĕртнĕ капиталловложенисен пысăкăшне палăртăпăр. Çулталăк пуçламĕшĕнче пирĕн балансра тĕп средствăсем 13.000 пин тенкĕ пулнă (активăн «А» разделĕнче кăтартнă 11000 пин тенкĕ тата баланс хыççăнче пассивра 2000 пин тенкĕ — кивелсе пĕтни). Эпир çӳлерехре палăртнăччĕ, тĕп средствăсен хакĕ 14.200 пин тенкĕ пулнă. Çапла ĕнтĕ, отчетлă çулталăк хушшинче тĕп средствăсем 1200 пин тенкĕ чухлĕ хутшăннă (14200 пин—13000 пин). Баланс çумне уйăрăмăн хушса кăларакан приложенисенче (кунта эпир вĕсене илсе кăтартмастпăр) тĕп средствăсен составне çуртсем, оборудовани, машинăсем т. ыттисем тăрăх уйăрăмăн кăтартса параççĕ. Çак приложенисем тĕп средствăсен уйăрăм пайĕсене ӳстерес ĕçре капиталловложенисемпе мĕнтери тĕрĕс усă курнине палăртма май параççĕ.

Калăпăр, çав приложенисене анализ туса пăхни çакна кăтартса парать: тĕп средствăсем пĕтĕмпе пĕрле 1200 пин тенкĕ чухлĕ ӳснĕ пулсан та, çĕнĕ объектсене ĕçе кĕртес тĕлĕшпе плана 15 процент тултарман. Çавăнпа пĕрлех машинăсене ĕçе кĕртес тĕлĕшпе татах та пысăкрах процент тулман, пурăнмалли çуртпĕр строительстви енĕпе вара, йăлтах урăхла, капиталловложенисен планĕнчен иртсе кайнă. Çапла ĕнтĕ, кунта предприятин производствăллă мощноçне ӳстересси çине мар, çав строительство çине пысăкрах тимлĕхпе пăхнă.

Тĕп средствăсене ӳстермелли çăлкуçĕ вăл—капиталловложени валли госбюджетран укçа-тенкĕ парса тăнă йĕркепе илекен средствăсем тата директор фондĕнчен пурăнмалли çуртпĕр строительствине каякан средствăсем (пысăк мар сумма) пулса тăраççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ отчетлă çулталăкра пуринчен малтан уставри фонд çав сумма чухлех ӳсни палăрать. Уставри фондран отчетлă çулта якалса пĕтнин суммине—500 пин тенкĕне—(балансра çулталăк пуçламĕшĕнче вĕçĕнче пулни çинчен калакан справкăна пăх) кăларса шутласан, уставри фонд 20800 пин тенкĕрен 22200 пин тенке çити ӳсни курăнать. Çав 500 пин тенкĕне кăлармасăр шутласан, уставри фонд укçа-тенкĕ парса тăнă шутпа çулталăк хушшинче 1900 пин тенкĕ чухлĕ ӳснĕ {(22200+2500)—(20800+2000)). Вĕсенчен 1200 пин тенки тĕп средствăсене кайнă, ытти 700 пин тенки вара предприятин хăйĕн оборотри средствисене ӳстермелли çăлкуçĕ пулса тăнă.

Предприяти запасĕсене, вĕсем çирĕплетнĕ нормативсемпе мĕнтери килĕшсе тăнине палăртни питĕ кирлĕ: материалсенче средствăсем усăсăр выртмаççĕ-и, вĕсемпе хуçалăх оборотĕнче рационально усă кураççĕ-и? СССР Верховный Соveчĕн Президиумĕ «Оборудованине материалсене сутма, улăштарма тата урăх çĕре пама чарасси çинчен тата çак законсăр ĕçсемшĕн судпа ответ тыттарасси çинчен» 1941 çулти февралĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указа пурнăçа кĕртнине тĕрĕслес ĕç валли запассене палăртни уйăрăмах кирлĕ.

Баланс активĕн «Б» разделри статьисене пăхса тухăпăр. Мĕн çинчен каласаççĕ-ха вĕсем? Çулталăк вĕçĕ тĕлне юлнă запассен пысăкăшне çирĕплетнĕ нормативпа тата Госбанк кивçен панă средствăсемпе илнĕ сезонлă запассемпе танлаштарса пăхсан, çакна куратпăр: предприятире хăшпĕр материалсем енĕпе запассем çителĕксĕр, тепĕр йышши материалсем енĕпе нормăран пысăкрах. Сăмахран, пирĕн баланс тăрăх çулталăк вĕçĕнче запассен нормативĕ 10550 пин тенкĕ шутласа, уставри фонд 20800

Колхозниксене çĕнçĕре кайма организацилер

☆ ★ ☆

Пуян пурăнатпăр

Эпĕ, Иван Егорович Егоров, Шупашкар районĕнчи Сарапахассинчи «Урожай» колхоз членĕ пулнă. 1940 çулта эпир çĕнĕ çĕре куçас тесе шухăш тытрăмăр. Чылай шухăшласа çурерĕмĕр. Çапах та тăван çĕршывран пăрахса тухса каясси — çăмăл мар. Тĕрлĕ калаçаççĕ. Пĕрисем — хурлаççĕ, теприсем — мухтаççĕ. Хăшĕсем хăратаççĕ.

— Мĕн çын сăмахне пăхмалла. Каятпăр Карело-Финн Республикине, — тетĕп. Ытти юлташсем те манпа килĕшрĕç:

— Каятпăр унта. Унта та вĕт Совет власçĕ, — терĕç.

10 хуçалăх пуçтарăнтăмăр та, çĕнĕ çĕре куçса килтĕмĕр. Колхоз организацилерĕмĕр. Колхоза «Красный герой» ят патăмăр. Пурăнатпăр. Ĕçлетпĕр. Суртсем калама çук лайăх. Пурнăç ăнтăлĕклĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн «Красный герой» колхозра 35 хуçалăх. Пирĕн колхозăн тырă акмалли çĕр 940 гектар. Утă мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлĕ çул. Вăрмантан пит пуян.

Халĕ ĕнтĕ эпĕ пĕр ĕне, 8 сурăх, 2 сысна, 10 чăх усратăп. Тырă-пулă манăн икĕ çул çисен те пĕтес çук.

Ачасем шкулта вĕренеççĕ. Чугунçулĕнчен 8 çухрăмра пурăнатпăр. Сахăн пек тулли пурнăçпа эпĕ çĕнĕ çĕре куçнăранпа пурăна пуçларăм. Пирĕн колхозниксен пурин те ĕне-сурăхсем, сыснасем пур.

Колхоз пирĕн пуян: кăлекен лашасем 21, ĕне ферминче 22 ĕне, икĕ вăкăр. Сысна ферми пур. Тата сурăх ферми, чăх-чĕп фермисем тăваткăр.

Çурхи тырăсене эпир майăн 24-мĕшĕнче акса пĕтертĕмĕр. Мĕнпурĕ 73 гектар тырă акрăмăр. Сахăр кăшманĕ 8 гектар акса хăвартăмăр. Тырăсем лайăх шăтса тухаççĕ. Халĕ пирĕн çĕр çинче икĕ трактор ĕçлет, вĕсем çĕртме валли сухалаççĕ.

Кăçал эпир хамăр колхозра кашни гектартан 200 пăт тĕштырă туса илме ĕмĕтленетпĕр.

Халĕ пирĕн колхозра пулă тытакан бригада ĕçлет. Кашни кун 5—6 центнер пулă тытса государствăна паратпăр. Пулăран колхоз кашни кун 500—600 тенкĕ тупăш илет.

И. ЕГОРОВ.
«Красный Герой» колхоз членĕ.

Хамăр çинчен пĕлтеретĕп

Эпĕ Карело-Финн СС Республикине 1940 çулта май уйăхĕнче çĕнĕ çĕре куçса килтĕм. Çулталăк ытларах çеç пурăнатăттăмха. Вырăна çитсенех эпир колхоз турăмăр. Мана колхоз председателĕ пулма суйларĕç. Колхоза «Красный Флот» ятлă хутăмăр. Пирваях пирĕн колхозра пурĕ 8 хуçалăхчĕ. Халĕ ĕнтĕ 19 хуçалăха çитрĕ. План тăрăх колхозра 30 хуçалăх пулмалла. Пирĕн колхозра пурте чăвашсем.

Вырăна çитсенех пирĕн колхоза государство 182 гектар акмалли çĕр, 130 гектар çулмалли çаран касса пачĕ. Иртнĕ кĕркунне эпир 25 гектар ыраш акса хăвартăмăр. Çуркунне калчасем питĕ лайăх тухрĕç. Колхозра ĕçлекен лашасем 20 пуç, тихасем 4 пуç пур. Ĕне ферми турăмăр, унта 30 ĕне. Ĕнесем пурте ăратлă. Колхозниксем пурте ĕнесем усраççĕ. Икшер ĕне усракан колхозниксем те пур. Сĕт-çу пирĕн кунта çителĕклĕ. Какайсăр пурăнмастăр, колхозниксем кашниех 2—3 сысна усраççĕ. Хамăр çĕр çинче кулĕсем пур. Вĕсенче пуринче те пулăсем нумай. Пулă тытатпăр. Пулла пирĕн ниçта хума çук. Халĕ пулăсене станцине илсе тухса суталтпăр. Чугунçул станци пирĕн колхозпа юнашарах. Çулсем пирĕн лайăх.

Çурхи тырăсене майăн 25-мĕш тĕлне акса пĕтертĕмĕр. Кашни гектартан 200 пăт тырă туса илме шанатпăр.

Эпир Финляндипе чикки ĕнчен инçе мар пурăнатпăр. Ку пирĕнтен пĕрре те хăрушă мар. Пире кунта Хĕрлĕ Çар часĕсем сыхлаççĕ. Эпир, колхозниксем, нимĕн хăрушлăхсăр ĕçлетпĕр. Çавăнпа та эпĕ Куславкка районĕнчи «Çĕнтерӳ» колхозĕнчи колхозниксене çапла каласшăн: кам пирĕн пата çĕнĕ çĕре куçса килес тесе шухăшлать, пĕр иккĕленмесĕр куçса килме пултаратăр. Куçса килехенсем валли пирĕн пӳртсем хатĕр. Кĕтетпĕр.

Петр Федорович ЧЕКУШКИН.
«Красный Флот» колхоз председателĕ.



Шупашкарти «Красный мебельщик» артельти столяр-стахановец А. Яковлев юлташ кулленхи нормăна 162 процент тултарса пырать. Белофинсене хирĕç пынă кĕрешӳ фронтĕнче командовани панă заданине кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллă пулнăшăн ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: А. Яковлев юлташ.
А. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Эпир сире кĕтетпĕр

Совет Союзĕпе Финляндипе правительствин 1941 çулти март уйăхĕн 12-мĕшĕнче тунă мирлĕ договорпа Совет Союзĕ çумне сахал мар çĕнĕрен территори куçрĕ. Ку шутран пĕтĕм Карельски перешеек, Ладога кӳллин хĕвеланăçĕпе сурçĕр хĕвеланăç енчи çĕрĕсем.

Куркийоки районĕ Ладога кӳллин сурçĕр хĕвеланăç енче. Кунта сахал мар утравсем тата çурмаутравсем. Ку вырăнсенче уйрăмăнах пулă тытакан колхозсем пулма кирлĕ.

Куркийоки районĕн территорийĕ финсен чи паха, усăллă лаптăкĕ пулнă. Кунта вĕсем пулă тытнă, вăрман хатĕрленĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ. Çавăнпа та кунта промышленноçлă предприятисем—вăрман завочĕсем, фанера тăвакан комбинат, тир-сăран, кирпĕч тата сĕт-çу завочĕсем сахал мар.

Пирĕн районра тĕштырă, тымар çимĕç акса тунисĕр пуçне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси пулмалла. Пĕтĕм акмалли çĕр лаптăкĕнчен — çурри таран клеверпа тимофеевка йышăнать.

1940 çулта пĕтĕмпе 76 колхоз организациленĕ. Вăл шутран чăвашсенчен 20 колхоз. Чăвашсенчен организацинленĕ колхозсене хуçалăх шучĕпе плана тултарас пулсан татах та 350 хуçалăха яхăн кирлĕ. Халиччен йышăнман поселоксем те пур-ха.

Ку таранччен организациленĕ колхозсенче ĕне ферми — 69, сурăх ферми — 41, сысна ферми — 21 тунă. Ку фермăсенче пĕтĕмпе 4500 выльăх-чĕрлĕх шутланать.

Выльăх-чĕрлĕх кунти условисенче пысăк тупăш пани паллах. Выльăх апачĕ кунта яланах çитет. «Труд» колхоз 1940 çулхи 5 уйăхра выльăх-чĕрлĕх продукцинчен 27 пин тенкĕ, Куусинен ячĕпе тăракан колхоз 7 пин тенкĕ, «Красная Чувашия» колхоз 5 пин тенкĕ тупăш илчĕç. Çапла вара «Труд» колхоз кашни ĕç кунне 14 тенкĕ укçан, 4 килограмм тĕштырă; «Красная Чувашия» колхоз 2 тенкĕ укçан, 6 килограмм тĕштырăн валеррĕç. Кун пек колхозсем кăçалхи çул татах та нумай пулаççĕ.

Ялхуçалăх артель уставĕпе кунти колхозник килĕнче пĕрер-икшер ĕне, 3—4 пуç таран пăрусемпе вăкăрсем, пĕр сысна ами, çурăсемпе, 10 таран суранхпа качака усрама ирĕк параççĕ.

Сахал çĕрлĕ районсенчен нумай çĕрлĕ районсене куçарса, унти пуянлăхпа усă курас çĕрте пирĕн партипе правительство питĕ нумай пулăшу параççĕ.

Переселенец пысăк льготăсемпе усă хурать. ЦИК тата СНК СССР 1937 çулхи ноябрь уйăхĕнче йышăннă постановлени тăрăх переселенец семьине, выльăхне тата куçакан пурлăхне кашни семье пуçне 2 тонна таран укçасăрах куçарать. Кунсăр пуçне çул çинче кунне пĕрре вĕри апат çитереççĕ, çырсем, выльăхсем чирлесрен астуса пыма медицина тата ветеринари работникĕсем яраççĕ.

Вырăна çитсен çуртĕр юсама 5 çуллăха 700 тенкĕ таран кивçен укçа параççĕ. Çуртĕр укçине 8 çул хушши тӳлемелле. Юлашки икĕ çул хушшинче ĕне пулман пулсан, ĕне туянма 5 çулллха 800 тенкĕ, хуçалăтра кирлĕ япаласене илме 3 çуллăха 300 тенкĕ кивçен параççĕ.

Переселенецсенчен организацинленĕ колхозсене лаша ферми, выльăх-чĕрлĕх фермисем организацилеме 5 çуллăха, тĕрлĕрен предприятисем: армансем, мастерскойсем т. ыт. те юсама 10 çуллăха кивçен укçа параççĕ.

Переселенец семьине малтан пурăнăм вырăнтан урăх çĕре куçарнă чух вĕсен тӳлемесĕр илнă укçа-тенкĕ парăмĕсене, натуральнăй поставкисене каçараççĕ.

Переселенец-колхозниксем тата вĕсенчен организацинленĕ колхозсем вырнаçни 2 çул çитиччен государство вăрманĕнчен кирлĕ йывăç каснăшăн укçа тӳлесрен хăтараççĕ.

Переселенец-колхозник семьине, кирлĕ пулсан, 2 çуллăх срокпа 3 центнер таран тырă кивçен параççĕ.

Çул çинче куçма çăмăлтарах пултăр тесе колхозник-переселенец хăй тухнă вырăнта çывăхри хатĕрлев пунктне пĕтĕм тыррине, çĕрулмине, выльăхне обменнăй квитанци тăрăх парса, çĕнĕрен çитнĕ вырăнта илме пултарать.

Çӳлте кăтартнă условисемсĕр пуçне, СНК СССР тата ЦК ВКП(б) 1940 ç. апрелĕн 25-мĕшĕнче Карело-Финн СС Республикин çĕнĕ районĕсене колхозниксене куçарасси пирки каларнă постановлени тăрăх, кунта куçса килекен переселенец-колхозниксене колхозсем пĕтĕм колхозăн пурлăхĕнчен, ухăтенкĕрен, капиталовложени средствинчен колхозника тивекен пайне уйăрса памалла.

Çав постановлени тăрăх колхозсем колхозник-переселенецăн паевой взносне, капиталовложение колхозник вырнаçнă колхозăн текущий счечĕ çине куçарса памалла, уйăрса панă натуральнăй пурлăха (вăрлăх фончĕсем, ялхуçалăх машинисем, выльăх-чĕрлĕх) мĕнчул уйăрса панине колхоз правленине пĕлтермелле.

Анчах нумай çĕртен килекенсем, уйрăмăнах Чăваш АСС Республикинчен килекен колхозниксем нимĕн те илсе килмеççĕ. Сăмахран, «Красное знамя» т. ыт. хăшпĕр колхозсем.

Чылай колхозниксем колхозниксем кунти пуянлăха туйса илчĕç. Молотов ячĕпе тăракан колхозра пулă тытса усă курма тăрăшаççĕ. Кунта колхозниксен шухăш-кăмăлĕ пит лайăх. Советски районри Пакăш ялĕнчен килнĕ колхозниксем, колхоза сентябрь уйăхĕн 30-мĕшĕнче кăна организацинленĕ пулин те, пурăнма лайăх условисем туса çитерчĕç. Вĕсем 30 пуç ытла шултра выльăх хĕл каçарчĕç. Лашисем мăнтăр. Суракине аван ирттерчĕç. Ялсоветри колхозсенчен пур енĕпе те малта пыраççĕ.

Кунашкал колхозсем пирĕн районра сахал мар. Вĕсем пурте, пĕтĕм çутçанталăк пуянлăхĕпе лайăх, йĕркеллĕ усă курса, пуян та культурăллă пурăнаспăн кĕрешеççĕ.

И. НИКОЛАЕВ.
Райсовет çумĕнчи переселенчески отдел инспекторĕ.
Карело-Финн ССР, Куркийоки.

Устава пăсаççĕ

КУКЕÇ. Ялхуçалăх артелĕн Сталинла уставĕн 6-мĕш статьинче артель çĕрĕпе пĕтĕмĕшпех усă курасси çинчен калана. Анчах Тренкассинчи «Актив» колхоз правленийĕ (председателĕ Спиридонов юлташ) ялхуçалăх артелĕн Сталинла уставĕн çак пунктне пăсать. Вăл иртнĕ çулта çĕнçĕре куçса кайнă колхозниксен килвырăнĕсене пачăçимĕç лартса хăварма шутламасть. Пушă выртакан килвырăнĕсене ку тарана çитсе те сухалама тытăнман.

«Актив» колхоз ялхуçалăх артелĕн 25-мĕш статьине те пăсать. Устав тăрăх ревизи комиссийĕн çулталăк хушшинче 4 хутран кая мар ревизи тумалла. Анчах кунта çулталăк хушшинче те пĕр хутчен çеç ревизи тунă. Колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсем те сайра-хутра çеç пулкалаççĕ.

Г. П.

Чугунçул транспортне — социал пайăлă пулăшу. Шупашкар районĕнчи ватă колхозниксем 26-мĕш километр çинче ĕçлеме тухнă. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (çулахайран сылтăмалла): С. Степанов («Победа» колхозран), К. Андреев («Урожай»), М. Высотов, Я. Гаврилов («Победа»), А. Никифоров, А. Максимов («11 лет Чувашии» колхозран).
К. БАБАЕВ фото-ӳкерчĕкĕ.

Вăрман хатĕрлес ĕçе вăйсăрлатмалла мар

Вăрнар вăрманпромхозĕнче ĕçлекенсен пурнăçĕнче лăпкă вăхăт килсе çитнĕ иккен. Хĕллехи вăхăтра чылаях шавласа, штурмласа илтĕмĕр, халĕ кăштах канса илес те, кĕр çитерехпе каллех шавламалла, штурмламалла пулать, тесе шутласçĕ пулмалла вĕсем. Çавăнпа вара вăрман касса хатĕрлес тĕлĕшпе пĕрремĕш квартал планне 26 процент, туртăрас тĕлĕшпе 18 процент, кирлĕ вырăнсене турттарса пырас тĕлĕшпе 14 процент кăна тултарнă.

Вăрманпромхозăн директорĕ Сазанов юлташ ĕç вăйĕ хăй тĕллĕн килсе тăрасса шанать пулмалла. Анчах вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ хăй тĕллĕн пыман, ăна пухас тĕлĕшпе те ĕçлемен. Суран ĕçлеме пĕччен çынсемпе договор тăвас плана 8 процент, лашапа ĕçлеме договор тăвас плана 19 процент кăна тултарнă. Вăрман касакансен ялан ĕçлекен кадрне вара вăрман участокĕсене тасатас ĕçе куçарнă. Çапла ĕнтĕ, вăрман хатĕрлес ĕç рабочисемсĕр тăрса юлнă. Шавсем лăпланнă хыççăн, вăрман та канать.

Кунта СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1938 çулти сентябрĕн 15-мĕшĕнче «Вăрман хатĕрлекен промышленноçăн ĕçне лайăлатасси çинчен» йышăннă постановлението пурнăçа кĕртмеççĕ. Плана шалашипех тултарнăшăн мастерсене преми хушса тӳлемеççĕ, социалламăртăва сарас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, социалламăртăва договорсене пурнăçа мĕнле пĕрсе пынине тĕрĕслемеççĕ. Дзержинский ячĕпе тăракан завод рабочийĕсем çур çулти плана срокпа тултарсси çинчен чĕнсе калакине вăрманпромхоз рабочийĕсемпе служащисем хушшинче халичченех сӳтсе явман пулнă.

Вăрманпромхозăнчи парторганизацин çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимех те туман. Вăл партиллĕ-политкăллă ĕçе çителĕксĕр туса пырать.

ВКП(б) Вăрнар райкомĕ те юлашки вăхăтра вăрман хатĕрлес ĕçе ертсе пырассине сӳреклетнĕ. Вăл вăрманпромхоз дирекцине ĕç вăйĕ пухас ĕçре çителĕклĕ пулăпса пымасть-ха.

Партипе правительство вăрман хатĕрлес ĕçе çулталăк тăршшĕпех туса пыма хушаççĕ. Çак çирĕп кăтартăва пĕр минутлăха та манма юрамасть.

Паллах, çак кăлтăка халех тӳрлетес пулать.

Парти райкомĕн пленумĕ

ЭЛĔК. Çак иртнĕ кунсенче парти райкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленине районра мĕнле пурнăçласа пыни çинчен сӳтсе явнă.

Партипе правительство йышăннă постановлени колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес хастарлăхне ӳстерчĕ, кăçалхи çуракине 5—6 кун хушшинче агротехника енчен пысăк пахалăхпа иртерме пулăшрĕ. Колхозниксем ĕç нормине яланах иртерсе тултарса ĕçлерĕç.

Çавнашкалах фермăра ĕçлекенсем выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстересшĕн кĕрешĕве вăйлатса пыраççĕ. Районри колхозсенче выльăх-чĕрлĕх йышĕ хутшăнсах пырать.

Парти райкомĕн пленумĕ ку тĕлĕшпе хăшпĕр колхозсенче çитменлĕксем пуррине те палăртрĕ. Панклей, Какаç Уçăлкасси колхозĕсенче халиччене звеносем туман пулнă.

Пленум партипе правительство йышăннă решенине колхозсенче тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма, колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатма тата тырпулсене уйран пуçтарса кĕме лайăх хатĕрленме хушса, решени йышăнчĕ.

Ф. ДАНИЛОВ.

Комсомол активĕн дисциплинине çирĕплетмелле

ÇĔРПУ. Июнĕн 8-мĕшĕнче ВЛКСМ райкомĕн пленумĕ пулмаллаччĕ. Анчах та райком пленумĕн членĕсем 26 çын пырас вырăнне, 12-шĕ çеç пынă, пленума 6 кандидатран пĕри те пыман. 121 пуçламĕш организацин секретарĕсенчен 13-шĕ çеç пынă. Çакăн пирки вара пленум пулмарĕ.

Фадеев юлташ—райком бюро членĕ. Пленумра вăл çарпа физкультура ĕçĕ çинчен доклад тумаллаччĕ. Çапах та вăл çав кун райкома пырса та курăнмарĕ. Райком пленумĕн членĕ Шорин юлташ Çĕрпӳ базарне пынă пулсан та, райкома кĕрсе тухмасăрах киле кайнă.

А. АНДРЕЕВ.

Çĕнçĕре куçса каяссине организацилесси— государствăллă пысăк ĕç

1939 çулти майăн 27-мĕшĕнче ЦК ВКП(б) тата ССР Союзĕн Совнаркомĕ «Колхозсен обществăллă çĕрĕсене салатса пĕтересрен сыхламалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление çапла палăртнă:

«Колхозсен обществăллă çĕрĕсем чакма пултарайманнине шута илсе, тата сахал çĕрлĕ колхозсенче колхозниксене устав нормисем тăрăх кил вырăн участокĕсем уйăрса пама кирлĕ çĕр резервисем пĕтнĕ пирки, çакăн пек колхозсенчен колхозниксене нумай çĕрлĕ районсене (Атăл тăрăхне, Омск облаçне, Челябинск облаçне, Алтай крайне, Казахстана, Инçет-Хĕвелтухăçне т. ыт. вырăнсене) куçарассине кирлĕ тесе шутлас». Ку постановлени государствăллă пысăк мероприяти пулса тăрать. Вăл ССР Союзĕн Хĕвелтухăç районĕсенчи пуян çимĕçлĕ çĕрĕсемпе анлăн усă курма, колхоз хуçалăхĕпе колхозниксен пурнăçне татах та лайăхлатма, юратнă тăван çĕршывăн хăватне ӳстерме пысăк майсем туса парать.

Чăваш АСС Республикинчи колхозниксем партипе правительствăн çак историллĕ постановлението хапăлласах кĕтсе илчĕç. ССР Союзĕн нумай çĕрлĕ районĕсене 1939—1941 çулсенче Чăваш республикинчен куçса кайнă колхозниксемпе единоличниксен хуçалăхĕсем пилĕ тинĕпе шутланаççĕ.

Совет Союзĕн Хĕвелтухăç районĕсем пуян та чаплă. Кунта промышленноçпа ялхуçалăхне татах та хăвăртрах аталантарса пыма пурте çителĕклĕ. Ылтăн, кĕмĕл, тимĕр-тăмăр, çĕркăмрăкĕ, нефть—темĕн те пур кунта. Сухалама юрăхлă çĕрсем, кĕтӳ кĕтмелли вырăнсемпе улăхсем вĕçĕ-хĕррисĕр сарăлса выртаççĕ. Кун çинчен куçса кайнă çынсем хăйсем хавхаланса пĕлтереççĕ. Акă мĕн сырать Чăваш республикинчен Алтай крайĕнчи Троицки районĕнчи «Пролетарский труд» колхоза куçнă Д. И. Просов:

«Эпĕ «Пролетарский труд» колхоз вырнаçнă тавралăхри çутçанталăк илемĕпе пуянлăхне каласа пама сăмахсем те тупаймастăп. Пирĕн колхоз—хитре кӳлĕ хĕрринче, юнашарах—тăрăн юханшыв, вăрман. Алтайăн пысăк çимĕç паракан уйĕсем анлăн сарăлса выртаççĕ. Кăçал эпир 15 лаша вăйлĕ турбинăна майлаштарса ĕçе ятăмăр. Унăн вăйĕпех халĕ арман тата клепка татакан çаврака пăчкă ĕçлеççĕ. Кӳлĕрен 150 центнер пулă тытма палăртнă.

Колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисем пиллĕк, выльăхсем нумай. Алтай çĕрĕ пит пысăк тухăçлă тырпул парать. Пуянăсса эпир лайăх пурăнатпăр, анчах пирĕн çынсем çитмеççĕ. Пире вăйпитти колхозниксем сахалтан та тата тепĕр 80 çын кирлĕ. Вĕсем валли халĕ çутă та, кăмăла киллентерекен пӳртсем тăваççĕ».

Çĕпĕр çĕрĕ — хăйĕн пысăк çимĕçлĕхĕпе палăр. Кăна çак тĕслĕхсем калама та çук лайăх çирĕплетсе параççĕ. Омск облаçĕнчи Андреевски районри колхозница Сергеева 1939 çулта гектартан 101 центнер тулă туса илнĕ. Нихçан курман-илтмĕн пысăк тухăçлă тырпул туса илекен Ефремов юлташа кам пĕлмест! Вăл тĕнчере чи пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ. Çавăн пек пысăк тухăçлă тырпула Омск облаçĕпе Алтай крайĕн ытти районĕсенче те туса илме пултараççĕ. Кăна тума малта тăракан агротехникăпа хĕçпăшалланнă çынсем кирлĕ. Ĕç вăйĕ çитменни Çĕпĕртри çĕрсен пуянлăхĕпе мĕн май хирлĕ таран усă курма чăрмантарать.

Çĕр талккăшĕн пуянлăхĕ çинчен ЦК ВКП(б) секретарĕ А. А. Андреев юлташ Новосибирск облаçĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕнче акă мĕн каланă: «Украинăра, — тенĕ Андреев юлташ, — колхозăн пĕр килне 9 гектар çĕр тивет, Калинински облаçра — 14 гектар, Мускав облаçĕнче—8 гектар, Воронеж облаçĕнче—11 гектар, Курск облаçĕнче — 10 гектар, Красноярск крайĕнче вара — 59 гектар, Новосибирск облаçĕнче — 49 гектар, Омск облаçĕнче — 49 гектар, Алтай крайĕнче — 47 гектар, Челябинск облаçĕнче — 40 гектар». Чăваш республикине илес пулсан, эпир çакна куратпăр: пирĕн колхозри пĕр киле çĕр мĕнпурĕ те 6,08 гектар çеç тивет, сухалакан лаптăк тата сахалтарах, вăл 4,9 гектар анчах. Пирĕн республикăри хăшпĕр колхозсенче пĕр вăйпитти колхознике акакан çĕр 0,34 гектар кăна тивнине кăтартакан тĕслĕхсем те пур (Октябрьски районри «Большевик» колхоз). Паллах ĕнтĕ, сахал çĕрлĕ колхозсен хуçалăхĕсене малалла ӳстерсе, пуянлатса пымалли пĕртен-пĕр çул вăл—колхозниксен пĕр пайне çĕн çĕре куçарасси пулса тăрать.

Çĕн çĕре куçса каяссине пирĕн колхозниксенчен нумайĕшĕ чăн та государствăллă пысăк ĕç вырăнне хурса ăнланаççĕ, ССР Союзĕн нумай çĕрлĕ районĕсене хапăл тусах куçса каяççĕ. Вĕсем — хăюллăхпа пултарулăха кăтартма пултаракан, тĕлпулма пултаракан йывăрлăхсенчен хăраса ӳкмен çынсем. Çĕн çĕре куççассăн пурнăç чăрмавсăрах майланса кайманнине ăнланаççĕ вĕсем. Паллах, кунта йывăрлăхсем пулаççĕ. Çавăн пекех, çĕн çĕре куçакансем çакна та лайăх пĕлеççĕ: вăл йывăрлăхсене çĕнтерме пулать, мĕншĕн тесен партипе правительство вĕсене пысăк пулăшу параççĕ. ЦИК тата ССР Совнаркомĕ 1937 çулти ноябрĕн 17-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх çĕн çĕре куçса каякансем пысăк льготăпа усă курараççĕ. Çĕн çĕре куçакансенчен тата хăйсемпе пĕрле япаласемпе выльăх-чĕрлĕхсене 2 тонна таран илсе кайнăшăн укçа илмеççĕ; çул çинче укçасăр апатлантараççĕ; медицина пулăшăвĕ параççĕ; вырăна çитсен кашни çемьех 3 центнер таран продовольстви ссуди илет; хуçалăхри тĕрлĕрен вак-тĕвек япаласене туянма кашни çемьенех кивçен 300 тенкĕ укçа параççĕ.

Çĕн çĕре куçса килнĕ çынсем вăрманпа 2 çул хушши укçасăр усă курараççĕ; пур тĕрлĕрен тӳлевсенчен те 2 çуллăха хăтараççĕ; çуртĕрсене 8 çул хушшинче тӳлесе татмалла параççĕ т. ыт. те.

Чăваш АСС Республикинчен 1941 ç. колхозниксене Алтай крайне, Омск облаçне тата Карело-Финн СС Республикине куçарса каймалла. Çĕр мĕн чухлĕ тивнине шута илсе, çĕн çĕре куçарса каймалли плансене вырăнсене ярса панă, вăл пĕлтĕрхи хисепрен чылай пысăк. Çака ĕнтĕ районри тата республикăри работниксене çĕн çĕре куçарассине большевикла организацилеме хушать. Ĕçе организацилес тени, чи малтан, акă мĕне пĕлтерет: çĕн çĕре куçас ыйту пирки колхозниксене тĕплĕн тата тăрăшса ăнлантарса памалла, куçса каймалли вырăнсен условийĕсемпе паллаштарас пулать. Куçма шутлакан хăй каякан края е облаçе уççăн пĕлсе тăтăр. Ку пуринчĕн те паллă чăнлăх ĕнтĕ. Апла пулсан та, районри руководительсем ку тĕлĕшпе юлашки вăхăтра массăллă ăнлантару ĕçне çителĕксĕр туса пынине сисĕнет. Хăшпĕр районсен руководительĕсем колхозниксене çĕн çĕре куçарас ыйтăва хакламасăр тăраççĕ, вăл пирĕн ĕç мар теме те пăхаççĕ. Çак йăнăш шухăша халех пĕтермелле, государствăллă пысăк ĕçе кашни работникăн тимлĕн туса пымалла.

Ăнлантару ĕçне туса пынă чух колхозниксене çĕн çĕре плансем йĕркене куçма уйăракан колхозсем экономикăллă пысăк усă илни çинчен халаса парас пулать. Элĕк районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхозран 1940 çулта çĕн çĕре 26 хуçалăх куçса кайнă. Вĕсем куçаччен колхозра кашни вăйпитти колхозник пуçне суха çĕрĕ вăтамран 2,32 гектар тивнĕ тата 120 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Халĕ вара суха çĕрĕ 3,81 гектар тивет, ĕçкунĕсене ĕçлесе илесси те нумай ӳснĕ. Акă тата асăннă районти «Доброволец» колхоза илĕпĕр. Ку колхозран çĕн çĕре 47 хуçалăх куçнă. Кунта та кун кăсăн вăйпитти колхознике тивекен суха çĕрĕ 2,0 гектартан 4,26 гектара çити, ĕçкунĕсем 124-ран 327,7 çити ӳснĕ. Халь илсе кăтартнă колхозсенчен çĕн çĕре вăйпитти колхозниксем чылай куçса кайнă ĕнтĕ, анчах вĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене пурпĕрех ăнăçлăн туса пыраççĕ.

Колхозниксене çĕн çĕре куçма уйăракан колхозсем пурте экономикăллă пысăк усă илеççĕ. Апла пулсан та çакна республикăри пур колхозсем те ăнланса илмен-ха. Вĕсем çĕн çĕре куçарас ыйтупа пачах та интереслемеççĕ, куçса кайма кăмăл тунă колхозниксем çине тимлĕн тата ăшшăн пăхмалла чух, йăлтах тепĕр майлă тĕслĕхсене кӳрма пулать.

Çаксем вĕсем пурте районсене çĕн çĕре куçарма панă плансене пурнăçлама чăрмантараççĕ. Октябрьски район ялхуçалăхне куçарма панă плансене 1939—1941 çулсенче пĕрре те тултарса курман. Палла-çке-ха, çĕн çĕре çĕр мĕн чухлĕ пуррине тата кил вырăнĕсен фондне шута илнĕ никĕс çинче куçармалла. Октябрьски районра тепĕр майлă пулса пырать. Кунта çĕн çĕре куçма районри пур колхозсенчен те суйласа илеççĕ. Çак тарниччен çĕн çĕре куçма районра 27 колхоз 5-шер хуçалăх таран уйăрнă (вĕсенчен пĕрер хуçалăх уйăрнисем чылай), 10 хуçалăх таран уйăрнă колхозсем мĕн пурĕ те 3 кăна. Çĕн çĕре куçарса каяс ĕçе çакăн пек сапаласа янинчен усă нумай пулас çук.

Çĕн çĕре куçарса кайма тунă плансене ăнăçлăн тултарас тесен, район руководителĕсен хăйсен колхозĕсенчи ĕç вăйĕн баланснe тĕплĕн вĕренсе шута илмелле. Ку енĕпе ĕçсем лайăх пыраççĕ теме çук-ха.

Пирĕн колхозсем хăйсен çĕрĕсене шута илсе, хуçалăха пĕр енен кӳмесĕр, çĕн çĕре куçарма колхозниксене нумай уйăрма пултараççĕ. Тĕслĕхшĕн Октябрьскине Çĕрпӳ районĕсене илĕпĕр. Октябрьски районран нумай çĕрлĕ вырăнсене тата промышленность валли 1320 хуçалăх, Çĕрпӳ районĕнчен—1310 хуçалăх уйăрма май пур. Çакна та кăтартмалла: Октябрьски районра 1940 çулта ĕçкунĕсен минимумне туман вăйпитти колхозниксен хисепĕ 1458 пулнă. Хăшпĕр колхозсенче вăл хисеп пит те пысăк. Акă, «КИМ», «Социализм», «Комбинат», Чапаев, Ленин, Водопьянов ячĕсемпе тăракан колхозсенче вăл 60-тан пуçласа 128 çынна çитет. Çаксем вĕсем обществăллă ĕçрен пăрăнса çӳрекенсем пулса тăраççĕ. Кун пек киревсĕр тĕслĕхсем ытти районсенче те пур.

Çĕн çĕре колхозра тӳрĕ ĕçленĕ колхозниксем хăна куçма пултараççĕ. Нумай çĕрлĕ районсене пуян-хакалсем куçма тивĕç мар. Нумай райсовет исполкомĕсен председателĕсем çакăн çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ-ха.

Çĕн çĕре куçса каякан колхозниксем çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Куçма кăмăллăнине пĕлтерсе панă заявленисене йĕркене кĕртни çур ĕç кăна пулса тăрать. Колхозсем куçакансене тивĕçлипе ăсатса ямалла. Вĕсем валли станцисене леçме туртăм вăйĕ, çул çинче кирлĕ пулакан япаласене çителĕклĕ уйăрмалла. Куçса каякан хăйшĕн тăрăшнине чăнлăхпах туйса тăтăр. Анчах хăшпĕр колхозсенче, тепĕр чухне, куçса каякансем çине чунсăрла пăхнисем тĕл пулаççĕ, вĕсене хăйсем ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсем тăрăх кирлĕ продуктсене вăхăтра памаççĕ (Шупашкар районĕнчи «Хучăхмат», Октябрьски районри Водопьянов ячĕпе тăракан, Чкаловски районри «Путь Ленина» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем т. ыт. те). Çĕн çĕре куçакансем çине киревсĕрле пăхассине малалла тĕпренех пĕтермелле.

Çĕн çĕре куçса каяссине организацилессине райсовет исполкомĕсен председателĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсем хăйсен аллине илме тивĕç. Çавна май, колхозниксене çĕн çĕре куçарма палăртнă плансене партипе правительство кăтартса панă срокра пурнăçлассишĕн кĕрешмелле.

В. ЧЕРНОВ.
ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн заведующийĕ.

Муссолини сăмахĕ

РИМ, июнĕн 11-мĕш. (ТАСС). Стефани агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 10-мĕшĕнче Италия вăрçа хутшăннăранпа çулталăк тултарнă ятпа Италири корпоративлă-фашистла палатăн ларăвĕ пулса иртнĕ. Çак ларурра Муссолини сăмах тухса калланă.

Хăйĕн сăмахĕн пуçламĕшĕнче Муссолини Италипе Греци хушшинчи вăрçă мĕнле пыни çинчен тĕплĕн каласа панă. Вăл çапла пĕлтернĕ: апрель уйăхĕ тĕлне Албанири фронтра итальянецсен 26 дивизи, кавалери дивизийĕсем 3 тата ытти часçем пулнă. Çавăн пекех унта 20 пин рабочи пулнă, вĕсемпе çулĕр çĕсенче усă курнă.

Италипе Греци хушшинчи вăрçăн тĕрлĕ тапхăрĕсем çинче чарăнса тăрса, Муссолини çапла калланă: 1941 çулти апрель уйăхĕ тĕлне Итали çарне пĕтĕмĕшпех çĕнтерӳ кӳме пултаракан положени пулса тăнă.

Грецине Итали хушшинчи вăрçăра Италин, Муссолини калланă тăрăх, 17 судно тата 2 эсминец пĕтнĕ. Суднăсен пĕтĕм водоизмещенийĕ—67 пин тонна. 5 суднăна сиен кӳнĕ. Суднăсемпе эсминецсен экипажĕнчен 295 çын пĕтнĕ. Итали авиацийĕн 97 самолет пĕтнĕ. 71 самолета сиен кӳнĕ. Самолетсем çинче пулнă çынсенчен 233 çын вилнĕ е пĕр хыпарсăр сухалнă, 128 çынна амантнă. Çĕр çинчи фронтсенче 13.502 çын вилнĕ, 38.768 çын аманнă, 17.547 çынна тăм илнĕ.

Малалла Муссолини Италипе Югослави хушшинчи вăрçă çинчен калланă, Югославипе Греци территорийĕсене пайласа уйăрни çинчен пĕлтернĕ. Германи командованийĕпе килĕшӳ тунă тăрăх, тенĕ вăл малалла, пĕтĕм Грецине, вăл шутрах Афины хулине те, Итали войскисем оккупацилеççĕ.

Хĕвелтухăç Африкăра, тенĕ Муссолини, Абиссинире противник хупăрласа илнĕ итальянецсен войскисем Дандила, Джимма тата Гондар зонисенче англичансене хирĕç кĕрешме пăрахман-ха. Муссолини виçĕ держава союзĕнчи туслăх çинчен пĕлтернĕ.

США вăрçа хутшăнни, тенĕ Муссолини, хальхи вăхăтри лару-тăрăва улăштараймасть.

Юлашкинчен Муссолини Италин шалти положенийĕ çинчен калланă. Вăрçă малалла чăсăлса пынă май, тенĕ вăл, «йывăрлăхсем ӳссе пыраççĕ». Запассем пĕтсе пынă май тата çĕнĕ территорисем хутшăннă пирки халăх йышĕ ӳснĕ май продовольстви тĕлĕшĕнчи йывăрлăхсем сивĕлеççĕ. Вăрçă малтан каласа хунă сроксенчен те вăрăмрах тăсăлас пулсан та, çĕнĕ йывăрлăхсем тухса тăраççĕ пулсан та тĕнĕл держависем çĕнтереççех, тесе шанса калланă Муссолини.

КĔСКЕН

✦ Аргентина ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ çапла пĕлтернĕ: США хăйне валли Аргентина территорийĕ çинче тинĕс-çар базисем пама ыйтман. Çавăн пек сĕнӳсем пулас пулсан, вĕсене Аргентина йышăнмасть.

✦ 1936 çултипе танлаштарсан, хальхи вăхăтра Мадридри халăх хисепĕ 100.000 çын хутшăннă. Вĕсем, пуринчен ытларах, хальхи вăхăтра хуласене куçса кайма пуçланă хресченсем.

✦ Муглĕре (Турция) çĕр чĕтреннĕ. Унти çынсем хăйсен çурчĕсенчен тухса кайнă, шалашсенче пурăнаççĕ.

✦ Бейпирра пурăнакан мĕнпуç çынсем хулара яланах пурăнма право илме тивĕçлĕ. Çав правăна панă чух çынсенчен уçса илеççĕ. Çак операцисенчен вырăссем 3 миллион доллара яхăн пухма шутлаççĕ.

УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: «Трактор» колхозăн (Комсомольски р.) 2-мĕш бригадири звеновочĕ, ялсовет депутачĕ тата колхоз правленийĕн членĕ Татьяна Филошпова юлташ.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Профсоюзпа комсомол кросне начар хатĕрленеççĕ

ВЦСПС тата ВЛКСМ Центральный Комитечĕ йышăннă тăрăх, июнĕн 15-мĕшпе 30-мĕш хушшинче профсоюзпа комсомол кросĕ пулса иртет. Кроса тепĕр кунтан пуçланать. Анчах Шупашкарти комсомол тата профсоюз организацийĕсем кроса хутшăнма начар хатĕрленеççĕ. Ана çак фактсем те аван çирĕплетсе пама пултараççĕ.

Водосветри комсомол организацийĕнче (секретарĕ Назаров) 13 комсомолец. Вĕсене пĕрне те медосмотр витĕр кăларман, тренировкăсем иртнĕ. Кунта малтанхи кун кроса миçе çын хутшăнасси палламар.

Çыхăну конторин коллективĕ пысăк, комсомолецсем шучĕ те сахал мар. Апла пулсан та кроса пачах хатĕрленмен, тренировкăсем туман. Медосмотр витĕр 7 комсомолеца кăна кăларнă.

Çавнашкалах комсомолăн Наркомфинри, Чăвашгизри, столовăйсен трестĕнчи, Чебторгри пуçламĕш организацийĕсенче те кроса хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Уйрăм организацисем кроса чăннипех те лайăх хатĕрленнĕ. Акă, кооптехникумра комсомолецсемпе профсоюз членĕсем, пурĕ 318 çын, кроса хутшăнаççĕ. Пурте медосмотр витĕр тухнă, 15 хутчен тренировка иртternĕ.

Г. К-н.

„Серп и молот“ колхоз чĕнĕвĕ тăрăх

ШАХАСАН. Районри колхозсем, Шупашкар районĕнчи «Серп и молот» колхоз чĕнĕвне ырласа, ăна пурнăçлас енĕпе татăклăн ĕçе тытăнчĕç. Шуркасси ялсоветĕнче ку сĕнĕве малтан ялсовет сессинче сӳтсе-явнă..

«Борец» колхоз 150, «Большевик» 105, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 190 тĕп ăйăра лартнă. Халь вăл йывăçсем аван чĕрелеççĕ. Ял хушшинчи тата уйри шырлансене те юсаса çитереççĕ. Ял хушшинчи сӳп-çапсене шăлса яла илем кӳртеççĕ.

Анат-Сурăм ялсоветне кĕрекен «Заря» колхозпа «Красное Сормово» колхоз та яла илемлетме тытăннă. Икĕ колхоз хушшинчи пысăк çырмара пĕрле пĕр пысăк пĕве тăваççĕ. Хальхи вăхăтра колхозниксем тислĕк тăкаççĕ. Килçуртсене тасатаççĕ.

В. НИКОНОРОВ.

Ачасен олимпиади

ЭЛЕК, июнĕн 12-мĕш. (**Телефон тăрăх, хамăр корр.**). Ачасен харпăрхăй пултарулăхĕн смотрĕн малтанхи кунĕнче, июнĕн 11-мĕшĕнче, Юманлăхри туллимар вăтам шкулти вĕренекенсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Олимпиада участникĕсем — отличниксемпе ударниксем. Пĕтĕмпе 40 ача, вĕсенчен 29 отличник.

Олимпиадăра ачасен хорĕ «Хĕвелĕмĕр Сталин», «Стахановла ĕçлесси» юрăсене лайăх юрласа пачĕ. Декламаторсем—улттăмĕш класра вĕренекен Петров Лермонтовăн «Три пальмы», виççĕмĕш класра вĕренекен Абаников «Красная Армия» сăвăсене аван вуласа пачĕç.

Олимпиадăра шавлă оркестр та пулчĕ. Оркестр «Светит месяц», «Яблочко» юрăсене кăмăла каймалла вылярĕ. Çак оркестра учитель Александров юлташ ертсе пырать.

ТЕАТР САМОДЕЯТЕЛЬНОÇĔН СМОТРĔ

Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш кунсем

Июнĕн 10-мĕшĕнче Академи театрĕнче Советски районти Тури Ачакри «Крестьянская газета» колхозри драмкружок коллективĕ Ф. Павловăн «Ялта» драмине лартса пачĕ. Коллектив членĕсем, хула сцени çине малтанхи хут тухнăскерсем, пирвайхи картинăсенче хăйсем пысăк публика умĕнче кăшт именнине палăртрĕç. Çапах та вĕсем хăйсене кирлĕ пек тытма тăрăшрĕç.

Елюк рольне вылякан колхозница Е. Потапова малтанах хăйне вăтанчăклăн тыткаларĕ. Унăн уттисем, хусканăвĕсем мĕнле кирлĕ, çапла тухаймарĕç. Юлашки картинăсенче, уйрăмăнах туй сценн çинче, вăл чĕрене хумхантармалла выляма пултарчĕ. Унăн ӳкĕнчĕклĕ сассине илтсен такамăн та куççуль тухмалла.

Ванюк рольне вылякан колхозник В. Русков хăйĕн задачине кирлĕ пекех ăнланса илеймен. Çавăнпа та вăл Ванюк образне чăннипех кăтартса паймарĕ, чылай çĕрте хăйне ача пек тыткаларĕ.

Колхозница О. Платонова Йăскар «ăстан çил вĕрет çавăнталла» туртăнас кăмăллă çын пулнине аван кăтартрĕ. Йăскар чухăн хĕрарăм иккенне, вăл хăйĕн ывăр пурнăçне пуянсем патĕнче ырă пулма тăрăшса çăмăллатма тăрăшнине куракансем умне артист чылаях ĕненмелле илсе тухрĕ.

Колхозник Г. Николаев Муççа рольне пăсарах вылярĕ, куракансене вăл хăйĕн çавăрăнăçусăр хăтланăвĕсемпе култарасшăн тăрăшрĕ.

Стаппан рольне выляма йывăртарах. Стаппанăн çăтканлăхне, унăн тискерле ĕçĕсене сцена çинче ăнланмалла кăтартса парасси—йывăр задача. Çак задачăна учитель И. Кудрявцев ăнăçлăнах татса параймарĕ. Вăл аллисемне яланах пĕр пек хăлаçланни, сăмахăн виçине пĕр пекрех илсе пыни хăшпĕр картинăсен вăйне палăртмаллах чакарчĕ. Çакăн пекех тата Пăрчăкан рольне вылякан Ю. Иванова юлташ та хăйне ытлашши çамрăкрах хĕрарăм пек тытăнарĕ.

Туй сцени çинче те техникăлла йăнăшсем пулчĕç. Сăмахран,туй пуçĕ — мăн кĕрӳ Стаппан килне халăхран чи кайран кĕчĕ. Ваттисен йăли тăрăх, туй халăхне хăй ертсе кĕмелле пулнă.

* * *

Смотрăн тăваттăмĕш кунĕнче—июнĕн 11-мĕшĕнче—икĕ спектакль пулчĕ. Улатăр хулинчи культура çурчĕн драмколлективĕ А. Островскин «На пороге к делу» комедине, Калинински районти «Алмаз» тата «Комсомолец» колхозсен коллективĕ М. Беловăн «Пурнăç пуçламĕшĕ» драмине кăтартрĕç.

«Динамо» клубĕн залĕ Шупашкар халăхĕпе тулса ларнă. Сцена çинче «Пурнăç пуçламĕшĕ» драма пырать. Калас пулать, коллектив пьеса шухăшне лайăх ăнланса илнĕ, спектакль мĕн пуçламĕшĕнчен вĕçне çитиченех лайăх иртрĕ. Смотр кунĕсенче лартнă чăвашла спектакльсенчен çакна чи ăнăсли теме юрать.

Тĕп рольсенче: Ваççук (ялсовет секретарĕ Н. Скворцов) Ульяна (учительница Григорьева), Хветут мучи (ялсовет председателĕ С. Пыркин) тата Элеçук (колхозник Мушляков) вылянисене уйрăмăнах ырă енĕпе палăртса хăварнă.

Ульяна чăнласах кирлĕ чухне этем чунне хурлантармалла, çӳçентермелле, тарăхмалла каласать. Элеçука вăл кулак ывăлĕ иккенне тӳрех туйса илетĕн. Унăн тумтирри, утти, сăн-сăпачĕ, мĕнпур хусканăвĕсем çăмăлтлайăлĕ, вĕçкĕнле, йĕрĕнмелле пулса тухаççĕ. Ваççукпа Хветут мучи те пулса çитнĕ образсемех. Пĕр сăмахпа каласан артистсем пурте хăйсен ролĕсене пысăк ăсталăхпа кăтартса пама пултарчĕç. Вăйăри, утарти тата аслă çул тăрăх катăргăна ăсатнă сценăсем ăраснах нумайччен асра юлаççĕ.

Спектаклĕн хăшпĕр çитменлĕхсене те палăртса хăвармалла. Паллăраххисем: пухăва пурĕ те 7—8 çын çеç тухнă, вĕсем те малтанах Хĕветут мучисĕр пуçне, ним чĕнмесĕр тăчĕç. «Пурнăç пуçламĕшĕ» музыкăллă драма, апла пулсан та юрăсем хăйсен мĕнпур сассийĕпе янтăраймарĕç.

Улатăрти коллектив пана спектакль те куракансен кăмăлне килĕшмелле пулчĕ.

К. КОЛЬЦОВ.
Н. МИТТА.

Профсоюзпа комсомол кросĕ умĕн

(Профсоюзпа комсомол кросĕн республикăри штабĕн председателĕпе Пароятников юлташпа калаçни)

Уйрăм районсенчи профсоюз тата комсомол организацийĕсем кроса тĕплĕн хатĕрленчĕç. Сăмахран, Елчĕк районĕнче комсомолпа профсоюз организацийĕсем кроса хатĕрленес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕç. Кроса хутшăнаканскене медосмотр витĕр кăларнă, тренировкăсем ирттернĕ. Судейски коллегисем уйăрнă, дистанцисене палăртнă.

Чылай районсенче кроса хатĕрленес ĕç çине çиелтен пăхрĕç. Организацилле ĕçсем, сăмахран, канаштлусем ирттернисĕр тата решенисем йышăннисĕр пуçне урăх нимĕн те пулман. Çакăн пек районсен шутне Советски районне кĕртме пулать. Çак районра комсомолецсемпе профсоюз членĕсене медосмотр витĕр кăларса пĕтермен, тренировкăсем ирттересшĕн кирлĕ пек организацилемен. Судейски коллегисене уйăрман, дистанцисем хатĕрлемен.

Уйрăм районсем, сăмахран, Улатăр районĕ иртнĕ ăмăртусĕн урокĕсене шута илмен, кроса хатĕрленес ĕçĕн пахалăхĕ çине питех сăвăрăнса пăхман.

Калас пулать профсоюз организацийĕсем комсомол кросне хатĕрленнĕ май хальхи вăхăтра тренировкăсем пыраççĕ. Ку тарăнчен тренировкăсене 27 команда (250 çын) хутшăннă. Çавăн пекех призывниксем те тренировка тăваççĕ.

Кроса хатĕрленес ыйтупа паян пуçламăш парторганизаци секретарĕсен районри канаштлăвĕ пулса иртет.

* * *

КАНАШ, июнĕн 12-мĕш. (**Телефонпа хамăр корр.**). Районра профсоюзпа комсомол кросне хатĕрленес ĕç вирлĕн сарăлса пырать. Нумай пулмасть профсоюз райкомĕсен председателĕсен канаштлăвĕ пулса иртрĕ. Канаштлу кроса ирттермелли мероприятисене палăртрĕ. Вырăнсенче пулăшу пама ялсене 17 çын кăларса янă. Кроса пĕтĕмпе 4000 çын хутшăнмалла. Ку тарăнчен медицина комиссийĕсенче 2110 çын пулнă. Вĕсенчен 1975 çын кроса хутшăнма пултараççĕ.

Кроса хатĕрленнĕ май хальхи вăхăтра тренировкăсем пыраççĕ. Ку тарăнчен тренировкăсене 27 команда (250 çын) хутшăннă. Çавăн пекех призывниксем те тренировка тăваççĕ.

Кроса хатĕрленес ыйтупа паян пуçламăш парторганизаци секретарĕсен районри канаштлăвĕ пулса иртет.

Канашри вагонсем юсакан завод пурнăçĕнчен

Г. Харлампьев ӳкерчĕкĕ.

Брак тата туса çитермен продукци туса кăларасси уйрăмăнах уйăх вĕçĕнче палăрать. Плана уйăх пуçламĕшĕнчех йĕркеллĕ, график тăрăх тултарса пыраççĕ. Пĕр 20 кун иртсен вара штурмовщина пуçланать. Унчухне ытларах продукци туса кăларассишĕн васкаççĕ, пахалăх çинчен манса каяççĕ.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта брак пулнă пирки тимĕрçĕ цехĕ (начальникĕ Пужаков юлташ) 2155 тенкĕ убыток тӳснĕ. Анчах брак тăвакансенчен пĕр пус та шыраса илмен. Вагонсем юсакан цехри комплекс начальникĕ Котик юлташ детальсене тĕрĕс мар тăвакансене хăй хӳтĕлеме пикенет. Пужаков юлташ бракланă детальсенех ытти цехсене тăратма, çапла вара брак пулнине пытарса хăварма пăхать.

Гелий ятлă газ

Хальхи вăхăтра дирижабльсене гелий ятлă газпа тултарма тăрăшаççĕ. Дирижабльсене ĕлĕкрешех тултаракан газ — водород питĕ çăмăл пулсан та, унăн пĕр çитменлĕх пур. Вăл питĕ хăвăрт тивсе илме пултарать. Çавăн пирки ĕнтĕ дирижабльсем çине кăшт пĕр хĕм лексенех çунма тытăнаççĕ. Гелий ятлă газ пĕтĕмпех урăхла, вăл ниҫҫан та çунмасть. Çавăнпа ĕнтĕ дирижабльсене гелийпе тултарни питĕ усăллă пулать.

Гелийпе ытти ĕçсенче те усă кураççĕ. Тĕслĕхрен акă, шыв айĕнче ĕçлекенсене кислородпа гелий хутăштарса парса тăрсан, вĕсем ахаль сывлăш парса тăнă чухнехинчен лайăхрах ĕçлеме пултараççĕ. Шыв айĕнче кессонсен ăшшăнă-кăшăнă нумай ĕçлесен кессон текен чир пулма пултарать. Кессонра ĕçлекенсене ахаль сывлăш вырăнне кислородпа гелий парса тăрсан, шыв айĕнче ĕçлекенсене кессон чирĕнчен хăтăлма пулăшать.

Гелий ятлă газа çĕр айĕнчен тухса тăракан газсенчен уйăрса илеççĕ. Анчах, астăвас пулать, çĕр айĕнчен тухса тăракан пур газсенче те гелий пулмасть. Гелий хăшпĕр уйрăм çĕртен тухакан газсен составне çеç кĕрет. Гелийлĕ газсем Америкăри Пĕрлешӳллĕ штатсенче тата пирĕн Союзăн çĕршывĕсенче çеç тĕл пулкалаççĕ. Çакăн пирки халь ытти пур государствăсенчи ученăйсем те гелий газне сывлăш-ран уйăрса илмелли майсем шыраççĕ.

Ф. К.

Театр самодеятельноçĕн организаторĕсене премисем пани

Искусство ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Комитечĕ нумаях пулмасть вĕçленнĕ театр самодеятельноçĕн смотрĕн итогĕсене тунă. Смотра театральнăй кружоксем 29.800 кружок тата уйрăм исполнительсем 417 пин çын хутшăннă. Смотр халăхăн художествăллă творчестви пысăккăн ӳснине кăтартса панă. Смотр театр самодеятельноçĕн идейăллă-художествăллă шайне ӳстерме, репертуара лайăхлатма, искусство работникĕсем театральнăй кружоксене шеф йĕркипе пулăшу парассине атăлтарма май панă.

Крайсенче, облаççемпе республикăсенче смотр организаторĕсем халăх творчествин çурчĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсенчен чи лайăххисене премисем панă. Пĕрремĕш премисене, укçан 6 пин пĕр тенкĕ, халăх творчествин Мускав облаçĕнчи çуртне, халăх творчествин Украина ССР-ĕнчи Центральнăй çуртне панă. Иккĕмĕш премисене Мускав хулинчи художествăллă самодеятельность çуртне тата халăх творчествин Азербайджанри çуртне, виççĕмĕш премисене — Ленинград хулинчи художествăллă самодеятельность çуртне, халăх творчествин Харьков тата Калинин облаçĕсенчи çурчĕсене панă. (ТАСС).

СПОРТ

„Учитель“ команди иккĕмĕш хут выляса ячĕ

Футбол вăййипе Шупашкар хулинчи малти вырăна тухассишĕн пыракан ăмăртура «Учитель» команди ниепле те çĕнтерӳ тăваймасть. «Медик» командине 2:1 шутпа выляса янă хыççăн, июнĕн 11-мĕшĕнче «Буревестник» командине те 2:1 шутпа выляса ячĕ.

«Учитель» команди вăйăра противникăн алăкне нумайччен хупăрласа тăрать пулин те, мяча тапса кĕртеймест. Хăйсем противник талăннинчен хытă сыхланаççĕ пулин те, вратарь начар выляни командăри чи вăйсăр участок пулса тăрать. Иртнĕ вăйăра «Буревестник» командине выляса ярассинчен пĕтĕмпе тенĕ пекех вратарь çăлса хăварчĕ. «Учитель» команди темиçе хутчен тапăнса пынă хыççăн, гол пулмалли хăрушă вăхăтра вратарь хăюллă пулни кăна çăлса хăварать.

* * *

«Динамо» спорт обществин Центральнăй Совечĕ çак обществăра футбол вăййипе малти вырăна тухассишĕн ăмăрту ирттерет. Июнĕн 15-мĕшĕнче, канмалли кун, Шупашкарти «Медик» стадионĕнче Ижевскри тата Шупашкарти «Динамо» командисем тĕлпулса выляççĕ.

Физкультурниксем спортăн пĕр обществинчен тепĕр обществине куçмалли çĕнĕ йĕрке

Физкультурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри Комитечĕ кăларнă приказ тăрăх спортсменсем физкультурăн пĕр организацийĕнчен тепĕр организацине куçмалли çĕнĕ йĕрке тунă. Çак приказ тăрăх кашни физкультурник, правило пекех, хăй ĕçлекен, вĕренекен, çар службинче тăракан вырăнта кăна физкультура коллективĕн членĕ пулма пултарать, çапла вара вăл хăйĕн коллективĕшĕн, хăйĕн физкультурăллă организацийĕшĕн кăна ăмăртусене хутшăнма тивĕçлĕ.

Физкультурник ĕçлекен вырăнти физкультура организацийĕ физкультурник ĕçлекен спорта ирттермест пулсан кăна физкультурник вăхăтлăха спортăн урăх обществине куçма пултарать.

Семье членĕсем (иждивенецсем) семьери çынсенчен пĕри ĕçлекен, вĕренекен тата çар службинче тăракан вырăнти физкультура коллективĕнче тăма пултараççĕ.

Спортсмен çĕнĕ ĕçе, вĕренмелли урăх заведенине е çар службине куçать пулсан хăй ĕçлекен çĕнĕ вырăнти физкультура организацине куçма пултарать.

Пĕтĕм Союзри Комитет физкультурăпа спорт ĕçĕсен вырăнти комитечĕсене пурне те, 1941 çулти сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, физкультурниксене хăйсем ĕçлекен, вĕренекен тата çар службинче тăракан вырăнти коллективсемшĕн е спортăн çав обществинче тăма вăхăтлăха ирĕк илнĕ коллектившăн кăна ăмăртусене хутшăнмашкăн ирĕк пама хушнă.

Июнĕн 11-мĕш. (ТАСС).

ПУЛНИ-ИРТНИСЕМ

Ишлей МТС трактористĕ И. Р. Суманов июнĕн 9-мĕшĕнче, ирхине 2 сехетре, Ишекри Сталин ячĕпе тăракан колхозра ирхи çĕртме туса пĕтерсе, Хураçырма çывăхĕнчи заправочнăй пункта тавраннă.

Çул çинче 5—6 метр тарăнăш çырма пулнă. Трактортан çутă пулман пирки, вăл çырма тракториста курăнман.

Çырма пуçĕпе çавăрăнă чухне çыран хĕрри ишĕлсе аннă, трактор çырма тĕпне йăванса кайнă.

Суманов трактор айне пулнă, вăл çавăнтах вилнĕ.

Семинар

Паян, июнĕн 13-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче предприяти руководителĕсем валли экономикăллă образовани тăрăх «**Промышленностьлă предприятин балансĕ тата ăна анализ тăвасси**» темăпа семинар пулать. Лектор — **Вечтомов** юлташ.

Семинар каçхине 8 сехетре пуçланать.

Парткабинет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПРОГРАММА РАДИОПЕРЕДАЧ

Ст. РВ—74, в. 943 м., вр. местное. 18 июня. 18.00—Передача для детей: „Детство Горького“. 20.30—Беседа: „Желудочно-кишечные заболевания и меры борьбы с ними“. 20.45—Концерт:—Отрывки из оперы „Мать“ музыка Желобинского.

Все передачи идут на чувашском языке.

ЕВРОПĂРИ, АФРИКĂРИ ТАТА АЗИРИ ВĂРÇĂ

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра авиацин хăшпĕр активлăхĕ палăрать. Германи командованийĕн сводкинче калланă тăрăх, Германи авиацийĕ Бристоль заливĕн çурçĕр пайĕнчи портсен сооруженийĕсем çине пырса тапăннă. Шотландин хĕвелтухăç енчи çыранĕ патĕнче тата Бристоль заливĕнче Германи самолечĕсем Англин суту-илӳ тумалли икĕ пароходне пуçтарнă, ытти 5 парохода сиен кӳнĕ.

Ыран июнĕн 11-мĕш тенĕ чух çĕрле, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англи авиацийĕн пысăк соединенийĕсем Францири Брест çине пырса тапăннă. Брест портĕнче, тенĕ çав пĕлтерӳре, Германин «Шарнгорст» тата «Гнейзенау» ятлă линкорĕсемсĕр пуçне Германин пĕр крейсерĕ пытанса тăрать. Çав крейсер — Германин пысăк калибрлă бомбăсем пăрахнă. «Шарнгорст» тата «Гнейзенау» линкорсене Англи авиацийĕ сиен кӳнĕ, халĕ вĕсем ремонтра тăраççĕ пулмалла.

* * *

Вăтаçĕр тинĕсĕн бассейнĕнче юлташки вăхăтра Англи авиацийĕн ĕçĕсем вăйланнă. Вăл пуринчен ытларах Родос утравне хирĕç кĕрешет. Ыран июнĕн 9-мĕш тенĕ чух çĕрле, тенĕ Англи командованийĕ къларнă коммюникере, Англи самолечĕсем Родос утравĕ çинчи çар объекчĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Родосри гаванĕн çурçĕр енчи молĕ çине бомбăсем тĕлех пырса ӳкнĕ. Çавăн пекех Калатори аэродром çине тата Каттавири самолетсем лармалли площадка çине бомбăсем пырса пăрахнă. Ыран июнĕн 10-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Родос утравĕ çине татах тепĕр хут пырса тапăннă.

Çурçĕр Африкăра, Тобрук патĕнчи фронтра, артиллери ĕçĕсем палăраççĕ. Германи командованийĕн сводкинче калланă тăрăх, Германипе Итали артиллерийĕ Англин Тобрук патĕнчи батарейĕсем çине персе тăнă. Итали командованийĕн сводкинче калланă тăрăх, Итали авиацийĕ англичансен Тобрук патĕнчи сооруженийĕсемпе склачĕсем тата позицийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Германи самолечĕсем Мерса-Матрух çине пырса тапăннă. Англи самолечĕсем, тенĕ Англи командованийĕ къларнă коммюникере, Триполи гаванĕпе Дернăри аэродром çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Хĕвелтухăç Африкăра, Абиссинире, Галла-Сидамо облаçĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Унта, Англи командованийĕ хăларнă коммюникере калланă тăрăх, англичансем 45.000 тăваткăл миля чухлĕ çĕнĕ территорине оккупациленĕ. Гондар секторĕнче те вăрçă ĕçĕсем сарăлса пыраççĕ. Итали сводкинче калланă тăрăх, Чильга патĕнче (Гондартан хĕвеланăç енче) çапăçусем пыраççĕ. Аддис-Абеба патĕнчен кăнтăр-хĕвеланăç енче, Джимма патне пырса хĕмелли вырăнсенче, итальянецсене тĕпрен илсен парăнтарнă, тенĕ Англи командованийĕ къларнă коммюникере.

* * *

Франци командованийĕ къларнă коммюникере калланă тăрăх, **Сирире** Англи войскисем Бейрутпа Дамаск еннелле татах тепĕр хут наступлени тума пуçланă. Июнĕн 10-мĕшĕнче ирхине, тенĕ коммюникере, Ливаипа Джебель-Друз хушшинчи çыранри районра малалла кайса пыракан англичансен чăсĕсем Мерджайун — Сассы-Габагиб линийĕ çинче пулнă (пушкирлĕ Эль-Леджа районĕн хĕвеланăç енчи хĕрринчи пункт).

Юнайтед пресс агентстви корреспонденчĕ Вишири пĕлтернĕ тăрăх, Трансиордани енчен наступлени туса пыракан англичансен отрячĕсемпе де Голль генералăн войскисем июнĕн 10-мĕшĕнче Дамаск патĕнчен 29 километрта пулнă. «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Анкарари корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: çапăçу пыракан вырăнта артиллерирен пени Дамаскра илтĕнет, çакă вăл артиллерин чи пысăк ĕçĕсем хула патĕнчен кăнтăр-хĕвеланăç енче, Эль-Кунайтрăран туснă кайнăлли çул çинче сарăлса пыни çинчен пĕлтерет.

Иракран Сири çине наступлени туса пыракан англичансен войскисем, тенĕ Юнайтед пресс агентствин Анкарари корреспонденчĕ çапла пĕлтерӳре, Камешле патĕнче Турци чикки патне çитнĕ, Турцине Сири урлă Иракпа çыхăнтарса тăракан чугунсул участокне хăйсем контроллесе тăраççĕ. Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Вишире официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 10-мĕшĕнче Англин 2 эсминецне сиен кӳнĕ. Кунсăр пуçне, Англин тепĕр 2 карапне июнĕн 9-мĕшĕнче сиенленĕ.

Англи авиацийĕ Бейрут çине хаярăн бомбăсем пырса пăрахнă тата Алеппопа Тадморти (Пальмира) аэродромсем çине пырса тапăннă.

Германи авиацийĕ, тенĕ Германи командованийĕн сводкинче, Хайфăри (Палестина) нефтехранилищĕсемпе порт сооруженийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Июнĕн 11-мĕш. (ТАСС).

„СЕРГИЕВСКРИ МИНЕРАЛЛĂ ШЫВСЕМ“ ЯТЛĂ

КУРОРТ

(Серноводск, Куйбышев облаçĕ)

СУТÇАНТАЛĂКĂН ЧИРТЕН СЫВАТАКАН ЧАПЛĂ ФАКТОРĔСЕМПЕ (Мацестăри йышши кӳкĕртлĕ-водородлă шыв, кӳкĕртлĕ-водородлă активизированнăй ваннăсем, чиртен сыватакан пылчăк, çеçенхирти пек типĕ климат) пуян. Движени органĕсене лекнĕ чирсенчен, чĕрепе сосудсен (ревматизм) чирĕнчен, гинекологически, нервнăй чирсенчен, ӳт-тир чирĕсенчен **çулталăкĕпех сыватаççĕ.**

Курортра пысăк квалификацилле консультантсем ĕçлеççĕ. Кăçалхи çул **курорт путевкăсене** курорт конторисем урлă мар, организацисемпе уйрăм çынсен заявкисем тăрăх **вырăнтах сутать.** Путевка хакĕ 880 тенкĕ, курсовой лечениĕн—250 тенкĕ; чирлисем ыйтнă тăрăх пурăнмалли пĕлĕмсем—28 куншăн 72 тенкĕлле параççĕ тата кунне 16 тенкĕлле тăрантарса усраççĕ.

ДИРЕКЦИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, сырусемпе рабоселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» тата «Хатĕр пул» журналсен — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 3426.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 293. Ф. б. 58 84 п. л.